Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 9 ТУНТИКУН 104 (4917) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Пленум решенисене татăклăн пурнăçа кĕртер

ПСК(б)П Тĕпкомĕн январти пленум решенисем партин пĕтĕм пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пленум решенисем парти организацисене тăшмансемпе вĕсен сăтăрла сийенлĕхĕсен йулашкисене социализм строительствин пур участкисенче те татăклăн пĕтерсе пыма мобилизацилеççĕ, коммунистсен политикăлă сисĕмлĕхне тата ытларах вăйлатаççĕ, çакăнпа пĕрлех, коммунистăн кунçулĕ çинчен тăракан ыйту çине тимлĕн пăхма хушаççĕ.

Январти пленум решенисене пурнăçласа чăваш парторганизаци пысăк утăмсем турĕ.

Парти ретĕсене çĕнĕрен илме пуçланă вăхăтран (1936 çулти ноябĕр) 1937 çулти сентябĕр уйăхне çитиччен чăваш парторганизацийĕ партине çĕнĕрен членсемпе кандидатсем илес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени пулман. Кун çинчен çав иртнĕ пĕр çулталăк хушшинче те партие членсем 111 çын, кандидатсем 86 çын кăна илни лайăх каласа парать. Парти Тĕпкомĕн январти пленумĕ хыççăн парти организацисем партие илес тĕлĕшпе хăйсен ĕçĕсене сисĕмлĕх вăйлатрĕç. Кун çинчен çак цифăрсем те лайăх каласа параççĕ. 1938 çулти январь уйăхĕнчен пуçласа апрел уйăхне çитиччен парти членне 133 çын, кандидата 194 çын илнĕ.

Çавăн пекех парти, совет, хуçалăх, профсойуз, комсомол, коопераци организацисене халăх тăшманĕсенчен, пăсăлса кайнă çынсенчен тасатса, вĕсен йĕртсе пыракан оргăнĕсене кĕрешӳре тĕрĕслеиĕ, Ленин—Сталин партийĕ пăхса ӳстернĕ работниксене лартса çĕнетес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем турĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн январти пленумĕ хыççăн пирĕн парти организацисемпе парти руководителĕсем парти членĕсен кунçулĕ çинчен тăракан ыйту çине тимлĕрех пăхма пуçларĕç. Партирен тĕрĕс мар кăларнă йулташсене кайала партин активлă пурнăçне хутшăнтармала тăвас йенĕпе те чылай ĕçсем турĕ. Парти райкомĕсем, хăйсен йанăшĕсене тӳрлетсе май, пуçламĕш парторганизацисем партирен кăларнă йулташсене 40 çынна кайала партие илнĕ. Парти Обкомĕ 73 апелĭацирен 61 апелĭаци пăхса тухса 23 çынна кайала партие илнĕ, 2 çынна сочувствуйущчине куçарнă. Партколлеги 113 апелĭацирен 80 апелĭаци пăхса тухса 39 çынна кайала партие илнĕ, 9 çынна кандидата, 2 çынна сочувствуйущчине куçарнă. Анчах та чылай парти организацисем хăйсен ĕçĕсенче пулнă йанăшсене тӳрлетес тĕлĕшпе çаплах çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Хăшпĕр райкомсем çапла шутлаççĕ: епĕр йанăш турăмăр пулсан, вăл йанăшсене тӳрлетесси пирĕн ĕç мар, çӳлти оргăнсен — Обкомăн, Парти Контролĭ Комиççин т. ыт. ĕçĕ тесе шутлаççĕ. Анчах кун пек шутлани вăл тĕрĕс мар. Парти организацисен хăйсем тунă йанăша хăйсен тӳрлетмеле. Партирен тĕрĕс мар кăларнă йулташсене тулли правасемпе парти çемйине тавăрмала, вĕсене ĕçре пулăшмала, вĕсем çине йулташла пăхмала. Анчах çак йĕркене чылай çĕрте пăхăнмаççĕ-ха. Час-часах партие кайала илнĕ йулташсем хушшинче те ĕç тупаймасăр çӳрекенсем тĕл пулаççĕ.

Çĕрпӳре йалхуçалăх техникум директăрĕ пулса ĕçленĕ Шаготăв йулташа, елĕкле, буржуалă националис, тесе партирен те, вырăнтан та кăларса йанă. Кунпа та çитмест, Шаготăв йулташа тата унăн арăмне, çак ĕçшĕнех профсойузран, хваттертен хăваласа кăларса йанă. Партколлеги Шаготăв йулташа партире хăвармала тăвать. Çакăн хыççăн Шаготăв йулташăн мăшкăлĕ пĕтмеле пек. Анчах мăшкăл, тĕрĕссипе, çакăн хыççăн пуçланать те. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ Шаготăв йул. кадрсем хатĕрлекен пайĕн инспекторне лартать. Унта вăл нумайах ĕçлеймест, февралĕн 13-мĕшĕнче ăна тĕштыр тытăмĕн аслă агрономĕ туса хураççĕ, мартăн 15-мĕшĕнче пуçуçавăрнăш ĕçĕсен агрономĕ тăваççĕ, мартăн 27-мĕшĕнче каллех Çĕрпӳри йалхуçалăх ĕçĕсен опытлă станцине йараççĕ. Унта ăна хăй пĕлекен ĕç памаççĕ, Шаготăв йул. халĕ те ĕççĕр çӳрет. Канаш райкомĕ тата Либермана партирен кăларнă хыççăн, парткабинет пуçлăхĕнчен хăтарса столовăйа кайса официанткă пулса ĕçлеме сĕннĕ. Либерман—аслă шкул пĕтернĕ. Йе тата çакăн пек тĕслĕх. Городничева партирен кăларнă хыççăн, Канаш хула совечĕ ăна хватертен тухса кайма хĕтĕртет. Городничев хватертен тухмасть. Вара хула совечĕ Городничев хватерне електричĕствă памала мар тăвать. Ăна, 15 çул хушши НКВД оргăнĕсенче ĕçленĕ çынна, Канашра нимĕнле ĕçе те илмеççĕ. Аптăраса Шупашкара килет. Аероклуба завхоз пулса ĕçлеме кĕме тăрать. Хăйсене хăйсем тулаш йопчен сыхăлăх кăтартма тăракан йулташсем ăна ĕçе илес пирки Парти Контролĭ Комиççинчен „санкци" илме йараççĕ. Çакăнтан ытларах тата мĕнле мăшкăл пулма пултарать?..

Иваньково вăрманпунктĕнче мастăр пулса ĕçленĕ Брыкина, билетсĕр вăрман касторпă тесе, ĕçрен кăларса йанă. Кун хыççăн Брыкина хватертен хăваласа кăлармa тăраççĕ. Вăл хватертен тухманнине кура ăна вăрмантан нимĕнле вутă та памала мар тăваççĕ. Апла пулсан та, пĕринче, Улатăр вăрманпромхоз директăрĕ Сорокин çак Брыкин хватер кăмакн мăрйинчен тĕтĕм тухнине курать. Кам ирĕк панине вутă хутать вăл, тесе тулăрса çитет Сорокин. Вара пожарнăй охранăна Брыкин хватерĕнчи кăмака мăрйине çĕмĕрме хушать. Мăрйене вĕсем çĕмĕрессине çĕмĕреймен, анчах пур-ха пирĕн хушăра çавнашкал тăмçамкалă етемсем.

Çавăн пекех парти организацисем тасаран коммунистсем çинчен елек сареа тăшманла-провокатăрла ĕçсем тăвакан карйериссене вăхăтра туртса илменни çинчен калакан фактсем те сахал мар. Канаш районĕнчех, тĕрлĕ елексемпе усă курса, механизатăрсен шкулĕн директăрĕ Степанăв, парторг Коваловскайа йулташа партирен кăларттарса йамала тăвать. Ковальовскайа йулташа — унăн упăшки тăшмансемпе сыхăннă, тесе айăпланă. Тĕрĕслесе пăхсан, çавăн пекки нимĕн те пулман. Райком пуçламĕш организаци решенине пăрахăçа кăлармала тăвать, анчах темшĕн, темĕнле сăлтавла Ковалевскайа йулташа хытă йатламала тăвать. Çав вăхăтрах Степанăв таса пулса йулать.

Кунсăр пуçне хăшпĕр райкомсем пĕрпĕр коммунист тунă айăпла ĕç çине сийелтен, формалĭнă, хăш чухне—либералла пăхаççĕ. Çакăн пек ĕçсене епĕр Улатăр райкомĕн ĕçĕсенче куратпăр.

НКВД оргăнĕсем Улатăрта тăшмансем 1937 çулта диверсилĕ акт тунă ĕçе тупса палăртрĕç. Кунта сăмах тăшмансем халăха пăсăк пулă çитерсе вĕлерсе пĕтерме тăни çинчен пырать. Вăл тăшмансене чылайĕшне тытнă, пĕтернĕ, анчах тытса пĕтерейменнисем те йулнă. Çак ĕçпех Улатăрти сутуилу базă пуçлăхĕ Казаков айăпланнă. Çав бандăн хурисем Казакова ирĕке кăлармала тăвас тесе алпустарса çӳреме пуçланă. Çав хут çине парти кандидачĕ Левагина ал пуснă. Тăшмана ирĕке кăларттарма ал пусни вăл—тăшман хутне кĕни пулать. Коммунистăн çакăн пек ĕç вăл каçармa çук пысăк айăп. Пуçламĕш организаци Левагинăна выгăвăр памала тăвать. Райком çак ыйту тавра пĕтĕм парти организацине ура çине тăратас, çак пример тăрăх пĕтĕм организацине коммунистăн ун пек тума йураманни çинчен вĕрентес вырăнне, ĕç çине сийелтен, йачĕшĕн пăхса, пуçламĕш парторганизаци решенине пăрахăçа кăлармала тунă.

Прилучнăй ĕçĕ пирки те райком çав позицийех тытать. Прилучнăй 1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче—ССРС Верховнăй Совет суйлав кунĕ—суйлав участкине ĕçсе пырса дебош тума тытăннă. Çакăн пек хăтланни вăл коммунистăн кăна мар, партире тăман çынна та тивĕçсĕр, киревсĕр йапала. Анчах райком çакăн пек примерсем тăрăх коммунистсене вĕрентме шутламасть. Вăл Прилучнăйа выгăвăр панипе лăпланать.

Хăшпĕр райкомсем йенчен тăшмансене хирĕç кĕрешес ĕçе йăвашлатма тăни те палăрать. Акă Канашри вакунсем йусакан савăтри уйрăм коммунистсем çинчен, вĕсем буржуалă националиссемпе хутшăнса ĕçленĕ тесе çырса панă зайавленисене халĕ те пăхса тухман.

Парти организацисен татах та татах ПСК(б)П Тĕпком пленум решенисем çинчен парти массисене ăнлантарса памала, тунă йанăшсене хăвăртрах тӳрлетсе пленум решенисене пурнăçа кĕртмеле. Партирен кăларас, йе кăларнисене кайала илмеле тăвас ыйтăва пăхса тухнă чухне кашни çын çине уйрăмăн пăхмала тăвас пулать. Партие тепĕр хут кайала илнĕ йулташсене партин активлă пурнăçне хутшăнтармала, вырăнсăр, сăлтавсăр йатран кăларнă парти членĕсене тӳрре кăлармала. Çак ĕçсене партин йĕртсе пыракан оргăнĕсен отчотпа суйлав кампанийĕпе тачча сыхăнтарса туса пымала.

Майски йулташ Галифакспа тĕл пулни

ЛОНДОН, майăн 6 мĕш (ТАСС). Пайан ССР Сойузĕн Англири полпречĕ Майски йулташ Англин йут çĕршыв ĕçĕсен министăрĕ Галифакс патĕнче пулнă. Унпа вăл чылай вăхăт хушши калаçнă.

* * *

Шахтĕрсемпе вĕсен çемйисен çулахи канăвĕ

Кăçал Донбасри горнйаксем 80 пин çын ытла Кавказри, Крымри тата Украинăри канмали çуртсемпе курортсенче пулаççĕ. Нумай шахтĕрсем тата вĕсен çемйисенчи çынсем çула Мускава, Ленинграда, Çурçĕр Кавказа, Днепр тăрăх екскурçине кайаççĕ. Çавна валĭли Донбасри кăмрăк кăларакансен профсойузĕн Тĕп Комитечĕ 600 пин тенкĕ укçа уйарнă.

Шахтĕрсен ачисем те лайăх канаççĕ. 3 пин ачана Одессăрипе Славйанскри канмали çуртсене йараççĕ, 75 ача „Артека" кайаççĕ, 32 ача лагĕрсенче канаççĕ.

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлас кампани анлăн сарăлса пырать. Рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин нумай çынлă пухăвĕсемпе митингĕсем пур çĕрте те политикăла пысăк çĕкленупе иртеççĕ.

Грузире, Арменире, Узбекистанра тата Азербайджан СС Республикĕнче суйлав кампани хĕрсех пырать. Еççыннисем суйлав умĕнхи пухусенче Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене хăйсен чи лайăх ывăлĕсене, тăван çĕршывăн мухтавлă патриочĕсене тăратаççĕ.

Грузири, Армениri, Узбекистанри тата Азербайджанри еççыннисем хăйсен пĕрремĕш кандидатне социализмăн аслă Конституцине тăвакана, большевикла çĕнтерӳсен организатăрне Сталин йулташа, унăн чаплă соратникĕсене тăратнă.

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совет депутатне суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче—партири тата партире мар чи лайăх большевиксем, çĕршывăн паллă çыннисем, рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем.

Тбилисири еççыннисем Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене рабочи-стахановец Ксоврелине, Йеристави профессăра, Девсурашвили слесăра тăратнă.

Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама тăратнă кандидатсен шутĕнче—йалти учителĭница Варсик Оганесйан, паллă стахановец Оганес Дарпинйан, трактăристкă-стахановка Ануш Карапетйан, стахановла бригадăн бригадире Акоп Гаспарйан.

РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсене хатĕрленесси те анлăн сарăлса пырать. Пăншер кружоксенче суйлавçăсем суйлав саккунĕпе Сталинла Конституцине вĕренеççĕ. РСФСР-ти хуласемпе йалсенче суйлавсене хатĕрленес йатпа нумай çынлă митингсем тата пухусем пулса иртеççĕ, суйлав участкисем палăртаççĕ.

Мускавра, РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсенче участкăсенчи комиççисен членĕсене кандидатсем тăратасси пуçланнă. Сталинск суйлав округĕнче çак ыйту тĕлĕшпе чылай предприйатисенче пухусем пулса иртнĕ. Хапрăксемпе савăтсен коллективĕсем тата еççыннисен общĕствăлă организацисем çак ответлă ĕçе чи лайăх производственник-активиссене тăратаççĕ, вĕсенчен нумайăшсем ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕсем вăхăтĕнче хăйсене палăртнă.

(ТАСС).

Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн актив пухăвĕ

МУСКАВ. Майăн 5-мĕш. Правителствă 1938 çулти мартăн 2-мĕшĕнче учреждениссен руководителĕсем улшăнна чухне ĕççене пăвин тата илнин актнĕ ал пусас умĕн актив пухăвĕсем тăвас пирки тата ĕççене парасилес йĕркесем çинчен йышăнна постановлени тăрăх, апрелĕн 27—28-мĕшĕсенче Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ çумĕнче актив пухăвĕ пулса иртнĕ.

Пухура 1.300 çын пулнă. Вăл хисепре—Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекен активиссем, çулсен тата политотделсен начаlĭникĕсем, Халăх Комиссариачĕн ответлă работникĕсем, отделенисен, станцисен, депосен командирĕсем, диспетчĕрсем, машиниссем, пăравуссене йышăнакансем, призводствăра малта пыракан стахановецĕсемпе ударниксем 150 çынна йахăн тата Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн курсĕнче вĕренекен командирсем 200 çын ытла пулнă.

Актив пухăвĕ Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн ĕçĕсене Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович Халăх Комиссарĕ пулнă А. В. Бакулинран илнĕ май Совет Контролĭ Комиççи представителĕ Р. С. Земляçка йулташ комиççин вывачĕсем çинчен пĕлтернине итленĕ.

Чукун çул транспăрчĕн ыйтăвĕсене сӳтсе-йавас ĕçе 40 çын хутшăннă.

Пухура тухса каланисене çелектăрла сыхăнупа чукунçул çинче ĕçлекен 40 пин çын итленĕ.

Пуху пĕтес умĕн Çулйĕр Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ пысăк та тĕплĕ сăмах тухса каланă.

Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн актив пухăвĕ чукунçул çинче ĕçлекенсене пурне те чĕнсе çыру йышăннă.

Пуху халăхсен йуратакан çулпуçĕ, револĭуци локомотивĕн аслă машинисĕ Сталин йулташ патне çыру йанă.

(ТАСС).

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама! 1938 майăн 26 кунĕ пурте

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ тĕлне Чăвашгиз кăларакан плакат, ăна Харлампиев художник укерне. Шипицин фотоукерчĕкĕ.

Совет Сойузĕ тăрăх

— Майăн 17-мĕшĕнче Хусанта иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çул кăларăмĕ) зайомĕн çиччĕмĕш тиражĕ пулать. Тиражра 1.060 выиграш 173 мĕлйун та 920 пин тенкĕлĕх пулать.

— Мускава май уйавне килнĕ йут çĕршыв рабочи делегачĕсем хулапа паллашаççĕ, предприйатисемпе кулĭтурăпа йала учреждениссенче пулаççĕ. Республикăлă Испани еççыннисен делегачĕсем майăн 7-мĕшĕнче Мускавра пурăнакан Испани ачисемпе тĕл пулнă.

(ТАСС).

Тбилисинче пулнă суйлав умĕнхи митинг

Майăн 7-мĕшĕнче Тбилисинче суйлав умĕнчи пысăк митинг пулса иртнĕ. Митингра 200 пин суйлавçă пулнă.

Митингра пулнисем тăвăллăн алă çупса пĕр саслăн Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

(ТАСС).

„Йермак" пăрçĕмĕрен Франц-Иосиф çĕрĕ патне кайать

Çитес кунсенчех Ленинградран 1938 çулти пĕрремĕш арктикăлă рейса „Йермак" пăрçĕмĕрен тухса кайать. Скандинави çурма утравĕ çуммипе çавăрăнса тухса, вăл Мурманск портне кĕрет, унта кăмрăк, ĕçмели шыв тата апат-çимĕç çителĕклĕ илсе, Франц-Иосиф çĕрĕн çыранĕсем патне кайать.

„Йермак" командине Тихайа бухтинчен унта хĕл каçнă „Русанов" пăрçĕмрене, „Пролетарий" тата „Рошаль" пăрахутсене илсе тухма хушнă. (ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри фронтра Вăта çĕрти тинĕс çыранĕсем патĕнчи районта, çавăн пекех Алиага районĕнче (Монталĭбанран кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле) республикă çарĕсем палхавçăсем хĕснине халĕ те тытса чарсах тăраççĕ.

Республикă çарĕсем Пиреней сектăрĕнче пулнă йулашки виçĕ çапăçура палхавçăсене чылайах пысăк çухатусем курнĕ. Малтанхи икĕ çапăçура фашиссен 4.000 çын пĕтнĕ, виççемĕшĕнче—палхавçăсен пĕр баталионне йалтах пĕтерсе тăкнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук. (ТАСС).

Фашисла Германире

Германире хĕрарăмсем валĭли обйазателĭнăй ĕç повиннăçĕ çинчен распорйажени кăларнă. Çав распорйажени тăрăх, 17 çултан пуçласа 25 ç. çитнĕ хĕрарăмсен пĕр çул помешчиксемпе кулаксен хуçалăхĕсенче ĕçлемеле. Пĕр çул ĕçленĕ ĕçшĕн хĕрарăмсене, çитерниссĕр пуçне, нимĕнле ĕç укçи те тӳлемеççĕ.

Хуçасен тата государствă предприйатисенче ĕçлеме йалхуçалăхĕнче ĕç повиннăçне иртерни çинчен ĕнентерекен справкă илнĕ хĕрарăмсене кăна илеççĕ. Çавăн пек справкă çук çынсене ĕçрен кăларса йараççĕ.

Фашисла влаççен çакăн пек распорйаженийĕ работницăсене калама çук хытăн тарăхтарать. Вăтам Германири чылай предприйатисенче пăлхавсем тухса кайнă—работницăсем уй-хир ĕçне кайассинчен чăнласах пăрăнаççĕ.

(ТАСС).

ФРАНЦИРИ ÇУРАКИ

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Франци хресченĕ хăйĕн уйхирĕнче.

(Сойузфото).

Фашисла террăр Германире тата Австрире

Чехословаки пичечĕ Германири фашисла террăр çинчен çĕнĕ фактсем илсе кăтартать. Пĕр Саарскра кăна майăн 1-мĕшĕ умĕн тата ун хыççăн темиçе çĕр рабочине арĕсленĕ. Бурбах йатлă хулара, сăмахран, 70 рабочине арĕсленĕ, Фелĭкливгре—80 рабочине тата ыт. çĕрте те. Рур облаçĕнче те массăлă арĕссем туса иртерне.

Австри рабочийĕсем нумайах пулмасть Германине екскурçине кайнă рабочисем хушшинче те массăлă арĕссем пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ. Германирен тавăрăннă хыççăн, екскурçинче пулнисенчен нумайăшĕсем предприйатисенче докладсем туса панă. Çав докладсенче вĕсем фашисла Германири еççыннисен начар пурнăçĕ çинчен тĕплĕн кăтартса панă. Çакăн пирки, докладсем туса çӳренĕшĕн, пĕр Венă хулинчен кăна 60 çынна концентрацилĕ лагĕрсене ăсатнă. Екскурçинче пулнисене отчотсем тума чарнă. (ТАСС).

Женеврi çĕççи

Майăн 7-мĕшĕнче Женевăра миршĕн кĕрешекен пĕтĕм тĕнчери йухăмăн Еçтăвакан Комитечĕн çĕççийĕ уçăлнă. Çĕççине йатарласах Лигă наци Совечĕн пулас çĕççин кун йĕркинчи тĕп ыйтусене—Испанири лару-тăру çинчен, Британин Игали Абиссинине туртса илнине йышăнасси çинчен пана сĕнĕвĕ çинчен, Йапони захватчикĕсемпе кĕрешес çĕрте Китайа пулăшасси çинчен тата Чехословакине фашисла хăрушлăх хăратса тăни çинчен—сӳтсе-йавма пухнă.

Миршĕн кĕрешекен пĕтĕм тĕнчери йухăмăн Еçтăвакан Комитечĕн çĕççинче пулма Женевăна Шверник йулташ çитнĕ. (ТАСС).

Провокацилĕ елексем

ХАНЬКОУ, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Йут çĕршыв çыннисенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, йапонецсем Китай çарĕсем çинчен елексем сараççĕ. Вĕсем: Китай çарĕсем вĕлерекен газсем йараççĕ,—тесе сăмах сараççĕ. ТАСС корреспонденчĕ вăрçă пуçланнăранпа вунă уйăх çитнĕ хушăра фронтри тĕрлĕ участкăсенче çиче хутчен пулнă, тылра чылай провинцисем тăрăх çӳресе курнă, анчах Китай çарĕсенче газсемпе атакăсем тума хатĕрленине ниçта та курман. Китай çарĕсенче йĕтарласа тунă химилĕ чаçсем çук. Йалтах урăхла, ТАСС корреспонденчĕ тата йут çĕршывсенчен пынă нумай çынсем Нанкинри тĕп госпитальре Йапони газĕсемпе аманнă Китай салтакĕсем выртнине курнă. Йапони провокацийĕсем çакна кăтартса параççĕ: Йапони çарĕ вĕлерекен газсемпе анлăн усă куртăр тесе, вĕсем тĕнчери общĕствăна шухăша хатĕрлеме тăрăшаççĕ.

Китайри расна районсенче

Малтан совет районĕсем пулнисем, халĭхи вăхăтра Китай республикĕн расна районĕсем, пулса тăракансемсем, Йапони захватчикĕсене хирĕç тăрас тĕлĕшпе чăн-чăнах халăхсене организацилекен центрсем пулса тăраççĕ.

Кунта влаç оргăнĕсене пурне те суйласа лартнă. Çакă вăл уйрăм районсен политикăпа хуçалăх аталанăвĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнать.

Вырăнти влаççем тата унта пурăнакан халăхсем салтаксемпе вĕсен çемйисене пысăкăн пулăшаççĕ. Салтаксен çемйисене тĕрлĕ налуксенчен хăтараççĕ тата вĕсене хватер укçи тӳлес йенпе çăмăллăхсем параççĕ. Кашни салтак тата унăн çемйи общĕствăлă магазинсенче питех те кирлĕ продуктăсемпе таварсем илнĕ чухне скидкăпа усă кураççĕ. Çавăн пекех çителĕксĕр таварсем те чи пирвай илме пултараççĕ. Салтаксен ачисем шкулсене тӳлевсĕрех çӳрес правапа усă кураççĕ. Çĕр ĕçне ĕçленĕ чухне салтак çемйин ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулсан, уйрăм районсенче пурăнакан халăхсем çĕр ĕçне тунă чухне тата уйри тырпулсене пухса кĕнĕ чухне вăл çемйене пулăшаççĕ. (ТАСС).

Массă хушшинчи агитацилĕ ĕçе тата анлăрах сарса пырар, совет граждăнĕсене пурне те суйлав саккунне ăнлантарса парар!

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççинче

Тĕп суйлав комиссийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламалли Положенин 35-мĕш статйи тăрăх, суйлав документсен формисене пăхса тухса çирĕплетнĕ. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламалли бюллетень шурă тĕслĕ, суйлав конверчĕсем шурă тĕслĕ, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлани çинчен памалли удостоверени формине, тĕп тата округсенчи суйлав комиссисен печет образецĕсене, суйлав ещĕкĕсен образецĕсене (йывăçран тунă ещĕк, çӳллĕшĕ 85 сантиметр, сарлакăшĕ 30×40 сантиметр) туса çирĕплетнĕ.

„Сасăлама права паракан удостоверени" формине, суйлавçăсен списки формине, „сасăлама права паракан удостоверени" тăрăх сасăлакан суйлавçăсен списки формине, участкăри тата округри суйлав комиссисен протоколĕсен формисене участкăри тата округри суйлав комиссисем Тĕп суйлав комиссине яракан шутлав листисене РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕ туса панă формăсене шайлă йышăннă.

РСФСР Верховнăй Советне суйламалли конверт образецне (сутă кăвак тĕслĕ), РСФСР Верховнăй Советне суйламалли бюллетенĕн образецне (сутă кăвак тĕслĕ) РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен тĕп суйлав комиссийĕ туса панă формăпах йышăннă.

Округсенчи, участкăсенчи суйлав комиссисене пама райĕçтăвкомсене чăваш, вырăс, тутар тата мордва чĕлхипе çырнă суйлав документсене хатĕрлесе пама.

Тĕп суйлав комиççин планĕпе комиççи членĕсем округсене тата участкăсене пĕрмаях тухса çӳресе вырăнсене ĕçне пулăшма пăхнă.

Майăн 7-мĕшĕнчен пуçласа 9-мĕшне çитиччен ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссисен председателĕсемпе секретарĕсен канашлăвĕсем пулса иртеççĕ. Канашлусенче райĕçтăвком председателĕсемпе секретарĕсем пулаççĕ.

Округсенчи суйлав комиççисен председателĕсемпе секретарĕсен канашлăвĕ

Майăн 7-мĕшĕнче, Шупашкарта, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççисен председателĕсемпе секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва Шупашкар çывăхĕнчи районсенчи суйлав округĕсенчен 81 çын килнĕ.

Округсенчи суйлав комиççисем умĕнче тăракан ĕçсем çинчен Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн секретарĕ—Т. В. Ваçилйĕв йулташ доклад туса пачĕ.

Çак кунсенче округсенчи пур суйлав комиççийĕсем те ĕçе тытăнмала. Суйлав комиççийĕсем лайăх çуртсенче ĕçлемелле, вĕсен телефонсем пулма кирлĕ. Майăн 10—12-мĕшĕ тĕлне участкăсенчи суйлав комиççийĕсене организацилемелле. Участкăсенчи суйлав комиççийĕсенче те ĕçре тĕрĕсленнĕ чи лайăх çынсем ĕçлемелле. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама участкăра пĕр комиççи пулаť, вĕсен номерĕсем çеç расна пулаççĕ. Суйлав ещĕкĕсем те расна пулаççĕ.

Т. В. Ваçилйĕв йулташ суйлав документсемпе мĕнле ĕçлемелли, вĕсене мĕнле тултармалли çинчен тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

Канашлура А. Н. Никифăрăв (Шупашкар хула суйлав округĕ № 1), С. М. Вишневский (Çĕрпӳ суйлав округĕ), В. Ваçилйĕв (Шупашкар хула суйлав округĕ №2), Фирсăв, Çмирнов, Оçипăв, Никифăрăв йулташсем тухса калаçрĕç.

Унтан ЧАССР Тĕпĕçтăвкомĕн председателĕ З. А. Андрейĕвă йулташ тухса каларĕ.

Ку ĕнтĕ пирĕн Верховнăй Совет суйлавне иртерес тĕлĕшпе иккĕмĕш екзамен пулаť. Иккĕмĕш екзамене те малтанхи пекех ăнăçуллăн тытмала. Хăшпĕр райĕçтăвкомсем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. РСФСР тата ЧАССР Конституцисемпе Суйлав Положенисене вĕренес ĕçре çитменлĕхсем нумай. Вăрнар, Йĕпреç районĕсенчи вулав çурчĕсенчен нумайĕшĕ суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Хăшпĕр вулав çурчĕсене вăрлăха яровизацилеме туртса илнĕ. Агитатăрсемпе пропагандиссен ĕçĕсене организацилесе йертсе пырасси те çителĕксĕр.

Канашлура суйлавçăсен спискисене тăвасси çинчен нумай каларĕç. Суйлавçăсен спискисене тăвас ĕç çине халĕ те çиелтен пăхнисем пур. Тутаркас районĕнчи Тепте тата Пушкăрт йалсовечĕсем суйлавçăсен спискисене йăлтах пăтраштарса тунă.

Суйлав округĕсемпе участкăсенче суйлав литератури çук. Сăмахран Йунка округĕнче (Тутаркас р.) РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленсе иртересси çинчен нимĕнле литература та çук.

Канашлу суйлава хатĕрленессине лайăхлатас йĕнĕпе конкретлă ĕçсем палăртса хăварчĕ.

Илемлĕ литературă вулаççĕ

Шĕмшешри (Елĕк р.) „Правда" колхозра колхозниксем кăну вăхăчĕсене культурлă иртереççĕ. Суха сухалакансем хушшинче канна вăхăтсенче кашни кунах РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисемпе Сталинла Конституцине вуласа ăнлантараççĕ. Кусемсĕр пуçне политвулавçăсем илемлĕ литературă кĕнекисене те вуласа параççĕ. Ку таранччен бригадăсенче Пушкинăн—„Капитан хĕрĕ", Гогăльăн—„Мир город". „Тарас Бульба", И. Туктащăн „Шурă Роза" калавĕсене вуласа тухнă. К.П.

Патăрйел районĕ

Чи шанчăклă çынсене—участкăри суйлав комиççине

ПАТĂРЙЕЛ. (Телефон тăрăх). РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама районра 38 суйлав участки пулаť. Халĕ суйлав участкисенче суйлав комиççи членĕсене палăртас ĕç пыраť. Районри суйлавçăсем ку ĕçе политикăла пысăк хастарлăхпа хутшăнаççĕ. Участкăсенчи суйлав комиççисен членĕсем пулса ĕçлеме партин чи шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсене, коммуниссемпе партире тăман больщевиксене палăртаççĕ.

Патăрйелĕнчи „Ленин çулĕ" колхоз колхозникĕсем 1-мĕш участкăри суйлав комиççи членĕ пулса ĕçлеме колхоз тимĕрçине, активлă колхознике Рыбачов Алексей Алексейĕвича тата ПСК(б)П членне, иртнĕ суйлавра участкăри суйлав комиççи членĕ пулса ĕçленĕ Гаврилăвă Анастасийĕ Михайлăвнăна палăртнă.

Катекри Молотăв йачĕпе тăракан промколхозра правлени председателне, ПСК(б)П членне, иртнĕ суйлавра суйлав комиççи членĕ пулса ĕçленĕ Дергунов Владимир Тимофейĕвич йулташа, колхозри паллă стахановкă Гордейĕвă Анастасийă Павлăвнăна, йалти активлă учитĕл-комсомолĕца Йакăвлĕв Леонид Йакăвлевич йулташа палăртнă.

Патăрйел йалсоветĕнчи 4-мĕш суйлав участкинче (пульницăра) медицинă работникĕсем суйлав комиççинче ĕçлеме комсомолка Смолина Лидийă Трофимăвнăна, Иванова Надежда Ивановнă врача, Гурйĕвă Лидийă Гурйĕвнă врача палăртнă.

Районра, участкăсенчи суйлав комиççи членĕсем пулса ĕçлекенсене палăртнипе пĕрлех, суйлав участкисен çурчĕсене те илемлетсе хатĕрлеççĕ.

Н. Пушкин.

Ленинградри „Светоч" хапрăкĕ РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавĕ валли вăхăтчен 23 мĕлйун конверт туса хатĕрленĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Машинисткă-конвертчица Н. Н. Воронинă ĕçре.

А. Агич фото-ӳкерчĕкĕнчен („Прессклише").

Çĕршыв оборонине тĕреклетессишĕн

(Инженер-морйак çырăвĕ)

ССР Сойузĕн Конституцийĕн 132-мĕш статйинче: „Пурне те тивĕ: çар повиннăçĕ — саккун пулса тăраť. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче çар службинче пулăсси—ССР Сойузĕн гражданинĕн хисеплĕ тивĕçе пулса тăраť", — тесе çырнă. Çак тивĕçе пирĕн çĕршыври кашни гражданинах лайăх ăнланаť. Акă епĕ Хĕрлĕйалавлă Балти флотĕнче шыв айĕнче çӳрекен кимĕ çинче ĕçлетĕп. Епĕр хамăрăн социалисăмла государствăна чĕререн йуратать пăр. Çавăнпа та хамăрăн тинĕсри чиккĕсене лайăх сыхласа тăратпăр. Ку пирĕн хисеплĕ тата ответлă задачă.

Епĕ Хĕрлĕ Флотра службăра пулнищĕн вĕçĕмсĕр хаваслăнатăп. Елĕк пирĕйтен пуйан çынсен ачисем „çĕтек-çурăк" тесе кулатчĕç. Унчухне епĕр вĕренме пултарайман. Епĕ пирĕн пек чухăн пурăнăçпа пурăннă чăваш ачисем аслă шкулсенчен вĕренсе тухнине астумастăп та.

Коммунисла парти тата вырăс рабочи класĕ йертсе пынипе пур халăхсем те ирĕке тухрĕç. Халĕ пур халăх та лайăх пурăнаť. Пирĕн чăваш ачисем хушшинче те аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем нумай. Акă епĕ те çар аслă шкулĕнчен вĕренсе тухса, инженер йатне илтĕм. Паллах ĕнтĕ, çак ирĕке, савăнăçлă пурăнăçа çĕнсе илессишĕн пирĕн аттесемпе пиччесем нумай кĕрешнĕ, нумай йун тăкнă. Кĕрешӳ ахаль иртмерĕ, хамăр ĕмĕте пурнăçа кĕртрĕмĕр. Халĕ РСФСР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленесси пыраť. Кунпа пĕрлех Чăваш республикĕнчи суйлавçăсем ЧАССР Верховнăй Совечĕн суйлавне хатĕрленеççĕ. Епĕр Чăваш республикĕнчи суйлавçăсене суйлав кунне — ийунĕн 26-мĕшне промышлĕннăçра та, йалхуçалăхĕнче те пысăк çĕнтерӳ туса илнипе кĕтсе илме чĕнетпĕр. Кашни рабочин, кашни колхозникĕн—суйлавçăсен пурин те суйлавра камшăн сасăламалине, мĕнле сасăламалине лайăх пĕлмелле. Çавăнпа та ĕнтĕ çĕнĕ суйлав саккунне, Сталинла Конституцине татах та лайăхрах вĕренес пулаť. Суйлава тĕплĕн хатĕрленсе тухмала, суйлава пур суйлавçăсене те хутшăнтармала.

Епĕр Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе телейлĕ пурăнăç турăмăр. Çавăнпа та çитес суйлавра епĕр социалисăм ĕçне, Ленинпа Сталин парти ĕçне чĕререн парăннă çынсемшĕн сасăлама тивĕçлĕ. Пурте пĕр çын пек пулса коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлатпăр.

Пирĕн Балти тинĕсĕнчи морйаксем РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавне хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ.

Хамăр обйазăннăçа çирĕп асра тытатпăр. Тăшман пирĕн çине килсе тапăнма шут тытсан ăна тинĕç урлă та, çĕр çинчен те, сывлăшран та хамăрăн çĕр çине йамастпăр. Епĕр хамăрăн социалисăмла тăван çĕршыва йуратать пăр. Пирĕн çапăçу вайĕ магтур, пире правителĕствă чи лайăх линкорсем, шыв айĕн çӳрекен кимĕсем, танксем, самолйотсем тата ыттисене те парса тăраť. Акă мĕншĕн епĕр çитес суйлавра хамăр çĕршывăн интересĕсене чĕререн парăннă çынсемшĕн, халăхсен телейлĕ пурнăçĕшĕн, çĕршыв оборонишĕн тăрăшса ĕçлекенсемшĕн сасăлама пулатпăр.

Колхозла йал палламала мар улшăнчĕ. Колхозниксем хăйсене валли йаланлăха телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çĕнсе илчĕç. Епĕр Балти тинĕсĕнчи морйаксем колхозниксем çитес суйлава татах та лайăхрах хатĕрленессе, суйлавра коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăласса шанатпăр.

3-мĕш ранглă çар инженерĕ
В. П. РАЗУМĂВ.

Çтена хаçачĕсем суйлава хутшăнчĕç

Тавăшкасси йалсоветĕнче (Çĕрпӳ р.) РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренме 36 кружок организациленĕ. Уйрăмăнах „Коминтерн" колхозри Иван Иванов йулташ йертсе пыракан кружок кăтартуллăн ĕçлет. Вăл кружокра 33 суйлавçă вĕренет, вĕсенчен 13 хĕрарăм.

Суйлавçăсене ыйтусем парсан вĕсем ответлеймен ыйтусене тĕрĕс ăнлантарса параť. Кăнтăрла, колхозри радиоузел урлă радио итлес ĕçе организациленĕ, вулав çуртне пынă çынсене хаçатсенче суйлавсем çинчен çырнă хыпарсемпе тĕнчери лару-тăрусен хыпарĕсене вуласа параť. Кружок занятийĕсем хыççăн, патефонпа „Жить стало лучше", „Песня о Сталине" „Песня о Родине", „Красноармейская пляска", „Купаççă" т. ыт. йурăсене те йурлаттараççĕ.

Çавăн пекех суйлав саккунĕсене И. Афанаçйĕв, Йефимăв, Арçентйĕв, Иванов агитатăрсем тăрăшса вĕрентеççĕ. Йалсоветра тухакан „Уларлă ĕçлер", колхозсенчи „Чапайĕв", „Малала", шкулти „Отличник" йатлă çтена хаçачĕсем те суйлав ыйтăвĕсене тĕплĕн çутатса пыраççĕ. Ку хаçатсем çинчен ыйтусемпе ответсен кĕтесĕсем организациленĕ.

Г. Шумилăв.

Парти пуçламĕш организацисенчи суйлавсен малтанхи итогĕсем

ШАХАСАН. Пуçламĕш организацисенче партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсем пулса иртрĕç. Партин пуçламĕш организацисенчи отчотпа суйлав пухăвĕсем коммуниссен политикăла ӳсĕмне кăтартрĕç. Тухса калаçнă коммуниссем парторгсен ĕçĕсене критиклерĕ чухне çитменлĕхсем тăрăх тĕрĕс политикла вывăдсем тунă. Активлăх пысăк. Партин пур пуçламĕш организацисенче те пекех отчотсем тăрăх коммуниссем пурте тухса каланă. Парти ретне çĕнĕрен кĕнисем те хăйсен активлăхне кăтартрĕç.

Мĕн пурĕ 9 парторг суйласа хăварнă, 4 парторга улăштарнă, çĕнĕрен суйланисенчен 2-шĕ парторга пĕрремĕш хут суйланаççĕ. Парторг заместителĕсем 11 суйланă, заместителĕсене 7 улăштарнă, вĕсенчен 4-шĕ пĕрремĕш хут суйланаççĕ.

Парторгсен заместителĕсем туни пурнăçра-ĕçре кирли курăнса тăчĕ. Вĕсем нумайĕшĕ парторгсем çук чухне вĕсене улăштарса ĕçленĕ. Ĕçре ӳссе çитĕнсе пынă, халĕ вĕсенчен парторга суйланисем чылай.

Çакна та каласа хăвармала. Хăш-пĕр пуçламĕш организацисенче парторгсем заместителĕсене ĕçе çителĕклĕ хутшăнтарман. Акă, райком çумĕнчи пуçламĕш организацинче парторг Миронăв хăйĕн заместителĕ Сорокин йулташа пĕр задани те паман, отчот çырнă çĕре те хутшăнтарман.

Майăн 20-мĕшĕнче районри коммуниссен отчотпа суйлав пухăвĕ пулмала. Унчен кашни пуçламĕш организацинчех райком хăйĕн отчотне туса параť.

С. Соколов.

Осоавиахимăн ЧАССР-чи Тĕп Советĕнчен

Осоавиахимăн ЧАССР-нчи организацин V-мĕш сйесĕ Краснов йулташа—Осоавиахимăн Елĕк районĕнчи советĕнче ĕçленĕскере, Биктимирăв йулташа аероклуб начальникĕ пулнăскере, Бельаков йулташа—стрелковой спорт клуб начальникĕ пулнăскере, Ананйин йулташа—Улатарти аероклуб начальникĕ пулнăскере халăх тăшманĕсене пулăшакансем тесе сйесран кăларса йанă тата Осоавиахим членĕнчен те кăларнă пулнă. ССР Сойузĕнчи Осоавиахимăн Тĕп Совет президиумĕ 1938 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнче çак асăннă йулташсене Осоавиахим членĕнчен кăларасси çинчен йышăннă постановленийе пăрахăç тунă.

Краснов, Биктимирăв, Бельаков, Ананйин йулташсене Осоавиахим членне илнĕ.

Осоавиахимăн ЧАССР Тĕп Совечĕ.

Йăнăшсене тӳрлетеççĕ

ТРАК. (Телефон тăрăх). Районри колхозниксем ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ колхозниксене колхозран кăларма чарасси çинчен йышăннă постановленине пысăк хаваслăхпа сӳтсе-йаваççĕ. Колхозран тĕрĕс мар кăларнисене колхоза кайала илеççĕ. Упи йалсоветĕнчи „Коминтерн", „Йанмурзино" тата Уйкас-Йунтабари „Çĕнĕ пурнăç" колхозсенче колхозниксене пĕр айăпсăрах колхозран кăларни пулнă. Йанмурзинăри колхозра Алексейĕвă Ольгăна, унăн упăшки кулак пулнă тесе, колхозран кăларнă. Ун упăшки вилни 12 çул иртнĕ. Уйкас-Йунтабари „Çĕнĕ пурнăç" колхозра та колхоз председателĕ Илйин тата вулав çурт пуçлăхĕ Шумилăв пуçарнипе Çеменăв Александра тата Пудкин колхозниксене колхозран саккунсăр кăларнă. Халĕ ку йăнăшсене тӳрлетеççĕ.

М. Иванов.

Суйлав комиççисене пулăшу

Суйлавçăсен спискисене тĕплĕн тумала

Пирĕн çĕршывра суйлавçăсем 94 мĕлйун çын ытларах. Суйлавçăсен спискисенче пур суйлавçăсене кĕртсе çырасси пит те пысăк тата ответлă ĕç. Суйлавçăсен спискисене тĕплĕн, тĕрĕс тата вăхăтра çырасси — сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене организацилĕ хатĕрленес ĕçри пысăк задачăсенчен пĕри.

Хуласенче суйлавçăсен спискисене хула совечĕсем тăваççĕ. Районсене пайланакан хуласенче — районти советсем. Йалсенче — йалсовечĕсем.

Суйлавçăсен спискисене пур граждăнсене те, — суйлав прави пуррисене, спискăна тунă вăхăтра çав совет территоринче (йалан йе вăхăтлăха) пурăнакансене, суйлав кунĕ тĕлне 18 çула çитнисене кĕртеççĕ.

Суйлавçăсен спискисене кашни суйлав участки тăрăх суйлавçăсем вăхăтлăха йе йалан пурăнакан вырăнсенче тăваççĕ.

Иртнĕ суйлав кампани вăхăтĕнче чылай çĕрте спискăсем тăвас ĕç çине çиелтен пăхни, суйлавçăсене списка кĕртмесĕр сиктерсе хăварнисем те пулнă. Сăмахран, Кийĕв хулинче пĕтĕм кварталă сиктерсе хăварнă пулнă. Çак йăнăшсене халĕ тума кирлĕ марри пуриншĕн те паллă. Суйлавçăсене пурне те спискăна кĕртмеле, вĕсем пурте Сталинла Конституцире çырса хунă аслă правапа влаç органĕсене суйлас правапа усă курччăр.

Нумай хуласенче уйрăм çынсĕн пĕчĕк çуртсем пур, вĕсенче пурăнакан çынсене тĕплĕн шута илмеççĕ. Мари АССР-чи Йошкар-Ола хулинче çавнашкал пĕчĕк çуртсенче пурăнакансене хăш-пĕрисене иртнĕ суйлав кампани вăхăтĕнче шута илмен, вĕсене суйлавçăсен спискисене кĕртмен. Çавнашкал йăнăшсене текех тумала мар. Çавăн пек çуртсене кайса çӳремеле, вĕсенче пурăнакансемпе калаçмала, суйлавçăсене шута илмеле, вĕсене спискăсене кĕртмеле.

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлама тунă спискăсем халĕ вырăнти советсенче сыхланса выртаççĕ. Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене иртерме суйлавçăсен спискисене тунă чухне вĕсемпе усă курас пулаť.

Суйлавçăсен йачĕ, ашшĕ йачĕ, хушамачĕ спискăсенче пит тĕрĕс пулмала. Иртнĕ суйлавра суйлавçăсен хушамачĕсене пăсса пĕтернисем чылай пулнă. Суйлавçăсен спискисенче çын йачĕсене пĕтĕмпе çырманнисем, малтанхи саспаллисене çеç лартнисем сахал мар пулнă. Çав йăнăшсене тăвассинчен хытă сыхланмала. Суйлавçăсен спискисене тăвасси çине çиелтен пăхни, суйлавçăсене спискăсене кĕртмесĕр хăварни, хушаматсене пăсса çырни суйлавçăна суйлав участкинче сасăлама кансĕрлет. Çавнашкал йăнăшсене хирĕç татăклăн кĕрешмеле, спискăсене тăвакан çынсене, ответлă пулма хушмала, бӳрократсене, ĕç çине çиелтен пăхакансене çак ĕç патне йамала мар.

Суйлав саккунĕ тăрăх, Советсен суйлав умĕн 30 кун малтан суйлавçăсен спискисене пурте пăхса тухма кăларса çакмала. Йе çав спискăсемпе паллашма суйлавçăсене май туса памала. Суйлавçăсен спискисене уççăн, чĕрнилпа, йе машинăна çырмала. Çырасса суйлав комиççи тунă формăлă бланк çине çырмала. Спискăсем çакăнса тăракан çуртра дежурнăй пулни кирлĕ, дежурнăйра тăракансем—Совет членĕсем суйлавçăсене спискăсем пирки справкăсем пама, суйлавçăсенчен спискăсенчи тĕрĕсмарлăхĕсем çинчен çырса панă зайавленисене илме, сăмахпа каланисене çырса йулма пултараççĕ.

Суйлав саккунĕ тăрăх, суйлавçăсен спискисене суд пригăвăрĕсем тăрăх суйлав прависĕр хăварнă çынсене, суд пригăвăрĕнче суйлав прависĕр хăварма кăтартнă пĕтĕм срук хушшинче, çавăн пекех тата саккун кăтартнă йĕрке тăрăх ăсран тухнă тесе шутлакан çынсене кĕртмеççĕ.

Судпа айăпланнă, анчах ăна суйлав прависĕр хăварман, хупса лартмалли çуртсенче, спецпереселенисенче пурăнмаççĕ, административлă йĕркепе сылка йаман пулсан, вĕсене суйлав спискисене кĕртеççĕ. Следствинче тăракан çынсене, вĕсене суд суйлав прависĕр хăварман пулсан суйлавçăсен спискине кĕртеççĕ. Çак документсем тăрăх çеç ăсран тухнисене списка кĕртмесĕр хăварма, йе спискăран кăларма йураť: суд психиатрин документĕ тăрăх суд йышăннă пригăвăр, йе ăсран тухнă çынсем сыналакан пульницăсемпе колонисенче пурăнакансен списки (ăна облаçри, крайри, хулари халăх сывлăхне сыхлакан пайĕсем тăратмала). Ăсран тухнă тесе шутланă çынсен спискисене сывлăха сыхлав пайĕсем суйлавçăсен спискисене тăвакан советсене йараççĕ.

Туркменире çакăн пек ĕçсем пулнă: хăшпĕр çĕрте пĕр çын хăй паллакан çынна ăсран тухнă пулĕ тесе шутлани тăрăхах суйлавçăсен спискисене кĕртмен. Суйлавçăсене çакнашкал спискăсене кĕртменни саккунлă ĕç мар. Суйлавçăсен спискинче тĕрĕсмарлăх пурри çинчен спискăсене кĕртменни, спискăсенчен кăларни, хушамата, йата, ашшĕ йатне пăсса çырни, суйлав прависĕр хăварнă çынсене спискăна тĕрĕс мар кĕртни çинчен зайавлени спискăсене çырса пĕлтернĕ совета, çавăн пекех участкăри суйлав комиççине памала. Зайавлени участкăри суйлав комиççине килнĕ пулсан, унăн çав зайавленине илнĕ кунах, спискăсене çырнă совета йамала.

Спискăри тĕрĕсмарлăх çинчен панă кашни зайавленинех висĕ кун хушшинче пăхса тухмала. Совет решенийĕпе килĕшмесен зайавлени паракан çын халăх судне жалăбă пама пултараť. Халăх сучĕ висĕ кун хушшинче, судăн усă ларăвĕнче, зайавлени паракана тата совет представителне чĕнсе, спискăри тĕрĕсмарлăх çинчен панă жалăбăна пăхса тухма тивĕç, хăйĕн решенине çийĕнчех зайавлени паракана та, совета та пĕлтермеле. Халăх сучĕн решенийĕ татăклă.

Хăйĕншĕн çеç мар, тӳрлеттерес текен çын çеç мар спискăри тĕрĕсмарлăх çинчен жалăбă пама пултараť. Спискăри тĕрĕсмарлăх çинчен кашни çын жалăба пама пултараť. Калăпăр, пĕр-пĕр граждăнин спискăра суйлавçăн йатне сиктерсе хăварнине, йе спискăна суйлав прависĕр хăварнă çынна кĕртнине асăрхаť. Ăнланакан çынăн спискăри тĕрĕсмарлăх çинчен совета йе суйлав комиççине зайавлени памала. Советсен кашни зайавленийе тĕплĕн тĕрĕслемеле, тĕрĕс решени йышăнмала.

Суйлавçăсене нихăшне те пĕр списка кĕртнисĕр пуçне урăх суйлав спискине кĕртме йурамасť.

Суйлавçăсен спискине çырса пĕлтернĕ вăхăтпа суйлав кунĕ хушшинче суйлавçă урăх çĕре куççан, кивĕ вырăнти ĕççынни депутачĕсен тивĕçлĕ Совечĕ ăна, Тĕп Суйлав Комиççийĕ йышăннă формăпа „сасăлама права паракан удостоверени" параť те суйлавçăсен спискинче—„тухса кайнă" тесе паллă тăраť; йаланлăха йе вăхăтлăха пурăнма куçнă çĕнĕ вырăнта суйлавçă, хăй камне пĕлтерекен удостоверени, çавăн пекех тата „сасăлама права паракан удостоверени" кăтартсан, суйлавçăсен спискине кĕртеççĕ.

Автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавĕпе пĕр кунах пулаççĕ. Сăмахран, Тутар АССР, ЧАССР, Крым АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем ийунĕн 26-мĕшĕнче — РСФСР Верховнăй Совет суйлав кунĕнче пулаççĕ. РСФСР-не кĕрекен ытти республикăсенче те çавах. РСФСР тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлама суйлав участкисем пĕрле пулаççĕ. Çакна май автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлама тунă суйлавçăсен спискисем пĕр вăхăтрах РСФСР Верховнăй Совет суйламалли спискăсем пулаççĕ. „Сасăлама права паракан удостоверени" илнĕ çын суйлав вăхăтĕнче автономлă республикă территоринче пулсан, вăл Сойузлă республикăн, çавăн пекех автономлă республикăн Верховнăй Совечĕсен суйлавне хутшăнаť.

РСФСР Конституцийĕ çапла калаť: „ытти пур Сойузлă республикăсен граждăнĕсем РСФСР территоринче РСФСР граждăнĕсемпе пĕртан правасемпе усă кураççĕ". Калăпăр, Украинă йе ытти сойузлă республикă граждăнĕ суйлав вăхăтĕнче РСФСР территоринче пулсан, вăл РСФСР Верховнăй Совет суйлавне хутшăнаť.

Спискăсене тĕплĕн тата тĕрĕс туни суйлав техникине çăмăллатаť. Суйлав пĕр кун хушшинче пулса иртет. Суйлав çуртне пынă суйлавçăсен паспорт, йе колхоз кĕнеки, йе хăй камне кăтартакан урăх документ кăтартаççĕ. Суйлавçăсен спискинче çынсем суйлавçă аллинчи документ çырнисемпе пĕр пек пулмала. Спискăсенче йăнăш пулни суйлава йăварлатаť. Çавăнпа та суйлав комиççисен пысăк задачи—суйлавçăсен спискисене вăхăтра тата темиçе хут тĕрĕслесси пулаť. Çапла туни спискăсенчи йăнăшсене пĕтерме пулăшаť. („Правда" хаçатран).

Столовай ĕçне лайăхлатмала

Пирĕн столовайсенче нумай тĕрлĕ тутлă апат-çимĕç пĕçерме лайăх условисем пур. Аш-какай, çăмарта, сĕт-çу, çĕрулми тата ытти продуктăсем те тулăх. Апла пулин те Шупашкарти механически савăт столовайĕ начар ĕçлет. Столовайĕнче йашка, катлет, кофĕ тата чейсĕр пуçне урăх ним те çук. Вĕсен пахалăхĕ начар, хакĕ хаклă.

Столовайĕнче посудăсем çителĕклĕ мар. Çавна пула çиме пыракан çынăн чылай вăхăт хушши кĕтсе лармала пулаť. Столовайра пĕтĕмпе те 8 стакан кăна.

Кунта тасалăх йĕнчен те йĕркелĕх çук. Сĕтелсем çинче апат йулашкийĕсем, çăкăр таткисем выртаççĕ, вĕсене час пуçтармаççĕ. Урай çумаççĕ.

Хăшпĕр чухне столовайĕнче çăкăр та çителĕклĕ пулмасť. Хура çăкăр пулсан шурри çук, шурри пулсан хура çăкăр пулмасť.

Рабочисем столовай ĕçне лайăхлаттасси çинчен тăтăшах калаççĕ, сĕнӳсем те параççĕ. Анчах заведуйущи М. Иванова ĕçе йусаса йарассишĕн, рабочисене йӳнĕ те тутлă апат çитерессишĕн тăрăшмасť. Савăтри организацисем те столовай мĕнле ĕçленипе интересленмеççĕ.

К. Пушкин.

1938 çулхи çураки

Бригадăсенчи агитатăрсем

Щăхасан МТС-че 21 бригада, вĕсенче пурĕ 45 трактăр, 135 трактăрис. Хĕл вăхăтĕнче трактăрсене вăхăтра йусанă пулсан та, çуракине тухсан хăшпĕр трактăрсене йапăх йусани палăрчĕ. 6-мĕш бригадăра пĕр трактăрăн шариклă подшипник ирĕлсе кайнă. Çакăн пек тĕслĕхсем ытти бригадăсенче те пулнă.

Бригадăсем кашнийĕх ăмăртаççĕ. Трактăриссенчен 100 çын ытларах ăмăртăва хутшăннă. Тимофейĕв, Варфоломейĕв трактăриссем кăçал парти кандидатне кĕнĕ. МТС дирекцийĕ халь вĕсене бригадирсем пулса ĕçлеме лартнă. Вĕсем йертсе пыракан бригадăсем çураки ĕçĕнче малта пыраççĕ. Тимофейĕв йертсе пыракан бригадăра 2 трактăр, 5 трактăрис. Вĕсем майăн 4-мĕшне 100 гектар ытларах сухаланă. Ку бригадăри Налимăв трактăрис пĕр çменăри нормăна 150 процент тултарса пырат. Çунтармали йапаласене вăл пурĕ 28 килограм перекетленĕ Тимофейĕв бригадир хăйех агитатăр пулса ĕçлет. Вăл трактăриссене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентес тĕлĕшпе 4 заңати туса иртерчĕ. Бригадăрах библиотекă пур.

Йандушĕв йертсе пыракан 17-мĕш бригадă та начар ĕçлемест. Трактăриссем хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Ф. Васильĕв трактăрис пĕр çменăра 7 гектар сухалат. Зайцĕвă, Йашманăв трактăриссем 6-шар гектар сухалаççĕ.

10-мĕш бригадăри Йаковлĕв трактăрис пĕрремĕш çул ĕçлет пулсан та, трактăрпа çменăра 6-шар гектар сухаласа пырат.

5-мĕш бригадăна кăçал парти ретне кĕнĕ Варфоломейĕв йертсе пырат. Вăлах бригадăра агитатăр пулса ĕçлет. Суйлав Положенисене вĕренес тĕлĕшпе кашни кунах заңати туса иртерет. Трактăриссене ĕçре пулăшса пырат.

Кашни бригадăрах библиотекă пур. Кунсăр пуçне кашни бригадă валли хаçат-журналсем çыранса пана. МТС дирекцинче ĕçлекен коммунисене бригадăсем çумне çирĕплетсе тухнă. Вĕсем бригадăсене кайса, йут çĕршывсенче, Совет Союзĕнче пулса пыракан ĕçсем çинчен ăнлантарса параççĕ.

Гр. Калинин.

Çураки ĕçĕ вăрăма чăсăлса пырат

ПАТĂРИЕЛ. (Телефонпа). Майăн 6-мĕшне районра 22 колхозра тĕштырăсене акса пĕтернĕ. Район пĕрчĕлĕ тырăсем акса плана 87,5 процент, пăрса йышши культурăсем акас плана 33 процент ытларах тултарнă. Йединоличниксем çуракипе кайа йулса пыраççĕ. Вĕсем тĕштырăсем акас плана 54 процент çеç тултарнă.

Районра массăлă ака пуçланнăранпа 15 кун иртнĕ пулсан та, 22 колхозра кăна ака пĕтерни район çураки ĕçĕпе йулса пынине кăтартат. Чылай колхозсем çураки ĕçне сӳрĕккĕн туса пыраççĕ. Ăмăртса тата стахановла ĕçлессине йертсе пымаççĕ.

„Çĕнтерӳ" колхозра ĕçе тĕрĕс организацилемен. „Хĕрлĕ Туçа", Сталин йачĕпе тăракан колхозсенче трактăрсене кĕтсе лашасемпе сухаламасăр тăнă.

Патăриел райçĕрĕç пайĕн тата МТС дирекцийĕн çураки ĕçĕпе татăклăн йертсе пымала. Çуракине пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн пĕтĕм колхозниксен массине мобилизацилемеле.

Н. Пушкин.

Нормăсене ытлашшипех тултаракансем

ЙЕЛЧĔК. (Телефонпа). Майăн 5-мĕшне районри 14 колхоз пĕрчĕлĕ тĕштырăсене акса пĕтернĕ. „Хĕрлĕ Хĕвелтухăç", „Хĕрлĕ партизан" тата ытти колхозсем те çуракине пысăк пахалăхпа иртерчĕç. Районри колхозсенче стахановла ĕçлекенсем сахал мар. Акă, „МОПР" колхозра Романăв колхозник 11 ретлĕ çейалкăпа йаланах 9 шар гектар акнă, Федăрăв икĕ касăлă плугпа 1,80 гектар сухаланă. „Ново Иверяково" колхозра Федăрăв колхозник 13 ретлĕ çейалкăпа 9,5 гектар акса пынă, Поликарпăвă 1,67 гектар сухаланă.

Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозра 11 ретлĕ çейалкăпа акас нормăна Йемельянăв колхозник кулленех 200 процент тултарса пынă.

Ф. Майков.

„Красное солнце" колхоз (Мускав облаçĕ, Солнечногорски р.) кăçал суртлă çĕрулми кăна лартат. Вăрлăхлăх çĕрулмине суйланă, ăна йаровизацилеççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. Н. Королев колхозник, йаровизаци йенĕпе ответлă вăл, йаровизацилеме хунă çĕрулмийе пăхат.

Горбунов фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Хĕрлĕ Чутай районĕнче финанс планне тата аш-какай тăратассине пурнăçа кĕртес ĕç мĕнле тăни çинчен, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти мартăн 17-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес майпа

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна палăртат: Хĕрлĕ Чутай районĕнчи руководительсем (райĕçтăвком председателĕ Данилăв йулташ, районри финанс пайĕн заведуйущийĕ Иванов йулташ тата Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕ Александрăв йулташ) Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак çулти мартăн 17-мĕшĕнче „Хĕрлĕ Чутай райĕçтăвкомĕ финанс планне, аш-какай тăратассине тата вăрман хатĕрлессине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен" йышăннă 243-мĕш номĕрлĕ постановленирен хăйсене валли нимĕнле вывăд та туман, район ĕлĕкхи пекех пысăк прорывран тухайман (çак çулти пĕрремĕш кварталти финанс планне 35,9 процент, иккĕмĕш кварталти финанс планне—14,6 процент кăна тултарнă).

Йалхуçалăх налогĕ пухассине 1937 çулти декабĕрĕн 20-мĕш тĕлне туса пĕтермеле пулнă, кăçалхи апрелĕн 29-мĕш тĕлне 43.500 тенкĕ пухмали парăм пур, культсбор тăрăх—232.900 тенкĕ (срук кăçалхи мартăн 15 мĕшĕнче иртсе кайнă).

Уйрăм йалсовечĕсем финанс планне тултарас тĕлĕшпе пачах та ĕçлемеççĕ: Хырлукасси йалсовечĕ тăрăх иккĕмĕш кварталта йалхуçалăх налукĕ шучĕпе пĕр пус та пырса кĕмен (тӳлемели 2096 тенкĕ), Паймаш йалсовечĕ тăрăх 1785 тенкĕ вырăнне пĕтĕмпе те 53 тенкĕ пырса кĕнĕ, Хĕрлĕ Чутай йалсовечĕ тăрăх 2526 тенкĕ вырăнне 75 тенкĕ пырса кĕнĕ тата ытти те. Колхозсенчен тупăш тăрăх шутласа илмели налука пухас тĕлĕшпе те ĕç начар пырат.

Аш-какай тăратассин çулталăкри планне кăçалхи апрелĕн 20-мĕш тĕлне пĕтĕмпе те 9,1 процент кăна тултарнă, вăл шутран: колхозсем—28,5 процент, колхозниксем—4,8 процент, йединоличниксем—5,3 процент.

Районра аш-какай тăратас тĕлĕшпе обйазательствă илнĕ йединоличниксем 3053 хуçалăх, вĕсенчен 2640 хуçалăхĕ государствăна аш-какай пĕр грам та паман (86 процент).

Ĕç çакăн пек тăнине акă мĕнпе ăнлантарса памала: Хĕрлĕ Чутай районĕнче тăшманла елементсем совет влаçĕн чи кирлĕ мероприйатийĕсене пурнăçа кĕртмесĕр хăварас тĕлĕшпе аркатулă ĕç туса пыраççĕ, вĕсем финанс планне тата аш-какай тăратассине пурнăçлас ĕçре саботаж организациленĕ, йединоличниксен хăшпĕр питех те кайа йулнă пайне тата уйрăм колхозниксене те хăйсем хыççăн илсе пыраççĕ, вĕсен хушшине политикăла пăсăлса кайассине илсе кĕреççĕ. Районри руководительсем çак политикăла сложнăй лару-тăру çинчен шухăшласа ăнланса илмен, колхозниксемпе йединоличниксем хушшинчи массăлă-ăнлантарулă тата организацилĕ ĕç çинчен мансă кайнă, саботажа пĕтерессине пурнăçа кĕртмен. Тăшманла елементсен йулашкисене татăклăн тăпăлтарса ыватса пырас вырăнне, колхозниксемпе йединоличниксене пурне те хăйсен государствă умĕнчи обйазательствисене пурнăçа кĕртме организацилес вырăнне—районри руководительсем пĕтĕм ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шанnă, ĕçе кулленех организацилессипе ĕçлемеççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. ССР Союзĕн Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи уполномоченнăйне Е. А. Александрăв йулташа, вăл государствăлă ĕçĕн ăна хушнă чи кирлĕ участкине йертсе пыма пултарайман пирки, малашне те ĕçре хăварма май çук, тесе шутлас.

Райĕçтăвком председательне Данилăв йулташа тата районри финанс пайĕн заведуйущийне Иванов йулташа, вĕсем районри ĕçе тӳрлетес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмасан, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вĕсем пирки çирĕп мерăсем йышăнасси çинчен асăрхаттарас.

2. Майăн пĕрремĕш çуруйăхлăхĕнче Хĕрлĕ Чутай районне государствă умĕнчи обйазательствăсене пурнăçлас ĕçре пулса тăнă лару-тăру çинчен районри колхозниксемпе йединоличниксене ăнлантарса пама Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместительне Ф. А. Матвейĕв йулташа йарас.

Ф. А. Матвейĕв йулташа Хĕрлĕ Чутай районĕнче йединоличниксем пирки йышăннă саккунсем мĕнле ĕçе кĕрсе пынине йатарласа тĕрĕслессине организацилеме хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. Спасăв.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ Н. Жукăв.

Шупашкар хули, 1938 çулти апрелĕн 30-мĕш.

Тăрăшса ĕçлеççĕ

ЙĔТĔРНЕ. Анат-Сăнарти „Çĕнĕ çул" колхозри çулйĕр бригади çурхи шыв çĕмĕрсе кайнă çулс не йусаса йака трĕ, хăйăр сарса тухрĕ. Кунсăр пуçне тата колхоз йал хушшинче пысăк пĕве турĕ. Ку пĕве уйрăмăнах вут-кăвартан сыхланас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрат.

С. Важорăв.

Екстракт пахалăхĕ лайăхлансах пырат

ÇĔМĔРЛЕ. „Большевик" савăт апрельте екстракт туса кăларас плана 106 процент тултарчĕ. Çакăнпа пĕрлех производствăн ытти йенсемпе те малала кайнă. Кăçалхи çулăн малтанхи уйăхсемне танлаштарса, пăхсан, ĕç тухăçлăхĕ ӳсни, чĕртаварсем расхутлассине чакарни курăнат. Сăмахран, чĕртаварсем расхутлассине 95 процента хăварнă, çав вăхăтрах туса кăларакан екстракт пахалăхĕ 103,3 процента çитнĕ. Çаксем ĕнтĕ савăтăн паха ӳсĕмĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем савăт малашне татах та лайăх ĕçлеме пултарни çине кăтартса параççĕ.

Савăтра социалисăмла ăмăртса ĕçлессипе стахановла йухăм сарăлсах пырат. Кашни çменă, бригадă кӳçса çӳрекен хĕрлĕ йалава илессишĕн кĕрешет. Апрель уйăхĕнче виççĕмĕш бригадă мала тухрĕ (çменă маçтăрĕ А. Стальский йулташ). Ку бригадă плана 108 процент тултарчĕ. Çак цехпа ăмăртса ĕçлекен 4-мĕш бригадă та иртнĕ уйăх планне 107, 8 процент пурнăçларĕ (çменă маçтăрĕ А. Тараканăв йулташ).

Илнĕ обйазательствăна кашни бригадă, рабочи ăнăçлăн пурнăçласа пырат. Акă, Л. Горбунов, З. Чувашăв, А. Кисменков т. ыт. стахановецсем кулленхи нормăсене 175 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. А Голубовский йулташ йертсе пыракан пăхăр шăратакансен бригади нормăна йаланах 150—200 процентшар тултарат.

Хальхи вăхăтра рабочисем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали куна ĕçре татах та пысăкрах ӳсĕмсем тупипе, çурçулăх плана ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Н. Иваницкий.

Кашни рабочи ăмăртса ĕçлет

ЕЛĔК. Çĕмĕрткассинчи промысла ертелĕнчи атă-пушмак тăвакан цех 1-мĕш квартăл планне 115 процент тултарчĕ.

Цех лайăх ĕçлеме пуçлани социалисăмла ăмăрту ĕçне сарса йанинчен килнĕ. Кунта кашни рабочи пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет, кашнийĕх плана ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Н. Ходарăвпа К. Никифăрăв йулташсем кашни куллен 4 мăшăр атă-пушмак йусас вырăнне 5—7 мăшăр йусаççĕ. Çавăн пекех Н. Бронский, И. Çергейĕв, М. Климентăв, И. Николайĕв йулташсем те нормăсене ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Рабочисем пушă вăхăта культурлă иртереççĕ. Ертелĕн хăйĕн хĕрлĕ кĕтес, библиотекă пур, унта 300 кĕнеке ытла. Хĕрлĕ кĕтесре шашкă-шахмăт, домино, хаçат-журналсем пур, радио та лайăх ĕçлет. Ĕç хыççăн рабочисем йаланах хĕрлĕ кĕтесе пуханаççĕ.

Кану вăхăтне лайăх организацилени рабочисене лайăх ĕçлеме хавхалантарат. **Ив. Кутузăв.**

Воздвиженски бригади малта

Шупашкарти електростанци.

Май уйăхĕнче електроенерги туса кăларассипе Воздвиженски йулташ йертсе пыракан 2-мĕш бригадă малта пырат. Бригадă кашни кунах плана ытлашшипех тултарат. Майăн 5—6-мĕшĕсенче 117,6 процентшар, 7-мĕшĕнче—115,9 процент тултарнă. 8-мĕшĕнче бригадă тата пысăк çĕнтерӳ турĕ, вăл 2772,36 килобат сехет електроенерги туса кăларса, плана 124,7 процент пурнăçларĕ.

Филиппăв йулташ йертсе пыракан бригадă та лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет, майăн 5-мĕшĕнче плана 116,2 процент тултарнă.

А. Воробйов.

Паллă маçтăр, стахановец Али Йулдаш Захрабăв („Азизбековнефть", Баку) нефт скважинисем шăтарас тĕлĕшпе Пĕтĕм союзри çĕнĕ рекорд турĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Али Йулдаш Захрабăв.

Шевцов фото-ӳкерчĕкĕ („Пресслише")

Рудникре ĕç пуçланчĕ

Вăрнар. Апрель уйăхĕн вĕçĕнче Ирар-Ишак фосфорит рудникĕ ĕçлеме пуçларĕ. Рудникăн кăçалхи çезонра 33000 тоннă фосфорит руди кăлармала. Кăçал руда кăларассине чылай механизацилеççĕ. Икĕ ексқаватăр ĕçлемеле. Ĕç хатĕрĕсем (кайло, тимĕр кĕреçесем) çителĕклĕ. Хăшпĕр шывлă вырăнсенче ĕçленĕ чух шыв такма насоссем пулаççĕ.

Рудникре Алгаçăнти йалпо лавка уçрĕ. Лавкара куллен кирлĕ, ĕçмели-çимелисем çителĕклĕ пур.

Рудникре ĕçлекенсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас йенĕпе те чылай ĕçсем туса иртернĕ. Ĕçлекенсене койкă, матрац, çитар, ĕç тумтирĕсем параççĕ. Рудникрех фельдшĕр пунктчĕ уçăлат. Кунта шашкă-шахмăт, домино, биллиард пур. Унтах хаçат-журналсем, радио.

С. Николайĕв.

Капитал çĕршывĕсенчи економикăлă çĕнĕ кризис

Капиталисăмла тĕнче çĕнĕрен економикăлă йăвăр кризис тапхăрне кĕрсе кайрĕ.

1937 çулти кĕркунне Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенче пуçланнă кризис мĕн пур капиталисăмла çĕршывсене хăвăртăн сарăлса пырат.

Пĕр çĕршыв хыççăн тепĕр çĕршывра промышлĕннăç производстви ӳксе пырат, тулти тата шалти суту-илӳ чакат, ĕçсĕрлĕх ӳсе пырат. Чĕртавар тата хатĕрлесе хунă фабрикатсен запасĕсем ӳсеççĕ, хаксем чакаççĕ, уйрăмăнах йалхуçалăх таварĕсемпе чĕртаварсен хакĕ ӳксе пырат. Биржăсем пĕрин хыççăн теприарканаççĕ, капиталиссем çаптаракан йумаха ĕненсе хăйсен перекечĕпе акцисем илнĕ мĕлйуншар çынсем халĕ çуклăха тăрса йулнă.

Çĕнĕ кризис чылай çĕршывсенче промышлĕннăç продукцийĕ 1929 çулти — малтан пулнă кризис умĕнхи çулти — çӳлĕшрен нумай йулса пыма тытăнсан пуçланчĕ. Сăмахран, Францире 1937 çулта промышлĕннăç продукцийĕ 1929 çултинчен 28 проц. сахалтарах, Польщăра—15 проц., Бельгире — 12 проц., Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенче тата Голландире — 8 проц., Чехословакире — 4 проц. сахалтарах пулнă. Лига наци пĕлтернĕ тăрăх, мĕн пур капиталисăмла çĕршывсенчи промышлĕннăç производстви 1937 çулта 1929 çултинчен пĕтĕмпе те 2 проц. кăна нумайрах пулнă, анчах çак пĕчĕк çĕкленӳ те Германире, Йапонире тата Англире хĕçпăшалсем тăвасси питĕ те вăйлăн ӳснипе кăна пулнă.

Тĕрĕссипе илсен, çĕнĕ кризис капиталисăмла тĕнче уйрăм йышши депреççирен тухма ĕлкĕречченех пуçланчĕ, çав депреççине капиталисăмла тĕнче 1930—1933 çулсенчи вăйлă кризис хыççăн кĕрсе ӳкрĕ, çав депреççи капиталисăмла тĕнчене, — Сталин йулташ партин XVII-мĕш сйесĕнче малтанах пĕлсе каланă пек, —промышлĕннăçăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ патне илсе пымарĕ. Вăл ак çакăнтан та аван курăнат: капиталисăмлă çĕршывсенче ĕççĕрлĕх, официаллă статистикă пĕлтернĕ тăрăх, 1929 çултинчен сахалтан та виçĕ хут ытларахчи курăнат, чăннипе илсен вăл татах та нумайрах.

Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенче, сăмахран, ĕççĕррисем 1937 çулта 1929 çултинчен пилĕк хут нумайрах пулнă, промышлĕннăçри рабочисен хисепĕ 5 проц. сахалтарах, тӳленĕ ĕçукçин хисепĕ 10 проц. сахалтарах, вак суту-илӳри таварçаварнăш 1929 çулхинчен 16 проц. сахалтарах пулнă. Çак цифăрсем татăклăнах акă мĕн çинчен каласçĕ: Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенче те ĕнтĕ рабочи клас иртнĕ кризис çуратса хăварнă çуклăхпа пысăк ĕççĕрлĕх условийĕсене тӳссе иртернĕ вăхăтрах çĕнĕ кризис пуçланса кайнă. Ытти çĕршывсенче рабочи клас пурнăçĕ татах та хурлăхларах.

Лигă наци пĕлтернĕ тăрăх, мĕн пур капиталисăмла çĕршывсен промышлĕннăç продукцийĕ 1937 çулти май уйăхĕнчен декабĕре çити вăхăтра 18 проц. чакнă. 1938 çулти малтанхи уйăхсем промышлĕннăç продукцийĕ тата та ытларах чакнипе паллă пулчĕç. Кризис йăвăрлăхĕ тĕлĕщĕнчен Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсем ытти çĕршывсенчен малта тăраççĕ, унта 1937 çулти майĕнчен 1938 çулти февралĕ çити хушăра промышлĕннăç продукцийĕ виçĕ пайран пĕр пайĕ чухлĕ чакнă (кунпа пĕрлех ĕç хатĕрĕсем туса кăларасси икĕ хут ытларах чакнă). Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенче производствă вăйлăн чакни мĕн пур промышлĕннăç чĕртаварĕн хакĕ ӳкесси патне илсе пынă, мĕншĕн тесен, Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсем вĕсемпе нумайăн усă куракансем пулса тăраççĕ.

Çакăн пирки те чĕртавар туса кăларакан аграрлă тата колони пулса тăракан çĕршывсене кризис хăвăрттăн çавăрса иле пуçларĕ. Чĕртавар хакĕ тата ăна илекенсен хисепĕ хытă чакнă пирки, аграрлă тата колони пулса тăракан çĕршывсен експăрт тупăшĕ те вăйлăн чакрĕ, вăл тата хăй черечĕпе çав çĕршывсен промышлĕннăç таварĕсем илес пултарулăхĕ чакасси патне илсе пычĕ. Çакă ĕнтĕ кирек йĕпле пулсан та кризис малала тарăнланса пырасси тата халĕ кризис кăштах кăна пырса тĕкĕннĕ промышлĕннăçлă çĕршывсене те кризис йарса илесси патне илсе пырат.

Промышлĕннăç кризисĕ аграрлă кризиспа пĕрлешсе кайат, çавăнпа кризис уйрăмăнах йăвăрланса пырат.

Хĕвеланăç Йевропăра кризис пуринчен ытла халăхсем хушшинчи суту-илӳпе пуринчен те ытларах çыхăнса тăракан çĕршывсене чи малтан йарса тытрĕ: Голландине, Бельгине, Скандинави государствисене. Çак çĕршывсенче нумайĕшĕнче промышлĕннăçăн чи кирлĕ отрăçлисен продукцийĕ чакса пырат, експăрт таварĕсен хакĕ пĕрмайах ӳкет. Бельгипе Швецире, сăмахран, йулашки уйăхсенче хурçă туса кăларасси иртнĕ çултипе танлаштарсан 25—30 проц. чакнă.

Кризис ĕнтĕ Англине те — пĕтĕм тĕнчери рынăкра чи нумайăн чĕртавар тата продовольстви илекен çĕршыва та — пырса перĕнчĕ. Кунтан кризис кирек йепле пулсан та малала сарăлса кайат, капиталисăмла çĕршвсене пĕрин хыççăн теприне йарса илсе пырат, вăл шутрах Германи, Итали, Йапони те. Вĕсем халех те ĕнтĕ тулти суту-илӳ чакнипе пысăк йăвăрлăхсем тӳссе иртереççĕ.

Кунсăр пуçне, çав çĕршывсенчи економикăлă лару-тăру унсăрах та ĕнтĕ питĕ йăвăр. Економикăлă çĕнĕ кризис, вĕсен ларутăруне çивĕччĕн начарлатат, вĕсене тулти сыхăнусенчи политикăлă авантюрăсен патнеле тата вăйлăраххăн тĕртсе пырат.

***

Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенче кризис нихăçанхи пек мар çивĕчленсе çитрĕ ĕнтĕ. Промышлĕннăç производстви чакса пынин йăвăртлăхĕсем халĕ иртнĕ кризис чухнехинчен чылай пысăкрах. 1929 çулти май уйăхĕнчен 1930 çулти йанваре çити вăхăтра промышлĕннăç продукцийĕ 22 проц. чакнă пулсан, хальхи кризис вăхăтĕнчи çав хушăрах — 8 уйăх хушшинче (1937 çулти май уйăхĕнчен 1938 çулти йанваре çити) — промышлĕннăç продукцийĕ 31 проц. чакнă. Производствă пысăккăн чакни ĕççĕрлĕх халиччен пулман пек ӳснипе пĕрле пулса пырат. Малтанлăха шутланă тăрăх, Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенче ĕççĕррисен хисепĕ йулашки 7 уйăх хушшинче 5—6 мĕлйун çын чухлĕ ӳснĕ, ĕççĕррисен пĕтĕм хисепĕ 13—14 мĕлйун çынна çитет.

Производствă нихăçанхи пек мар чакса пыни чылай чухне хурçă тресчĕ тата ытти шултра монополисем йатарласах производствăна чакарма хăтланнинчен те килет, вĕсем рабочисене хĕнхур кăтартса, йулашки çулсенче панă уступкăсене рабочисенчен туртса илме тăрăшаççĕ. Çапах та продукци кăларасси чакнин тĕп сăлтавĕ Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсен промышлĕннăç валли тулти тата шалти рынăксем хĕсĕнни пулса тăрат, çавăн пирки те туса кăларнă таварсем ытлашщи пулса кайнă.

Буржуази лару-тăру лайăхланасси çине шанчĕ пулин те, 1938 çулти малтанхи уйăхсем промышлĕннăç продукцийĕ малала чакса пынипе паллă пулчĕç. Халĕ кризис çивĕчленнин иккĕмĕщ хумне кĕтмеле. Вăл ĕнтĕ ĕççĕрлĕх татах та нумайланассине, кулĕн кирлĕ таварсене туса кăларасси тата та ытларах чакассине пĕлтерет. Економикăлă çĕнĕ чĕтренӳсем килессине пĕлтерекен пĕрремĕш хыпар вăл — Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенчи биржăсем арканни тата тавар хакĕсем чакни пулса тăрат, чи йулашки уйăхсенче те хаксем чакни тата биржăсем арканни пулнă.

Англире 1938 çулти пĕрремĕщ квартăлта продукци туса кăларасси промышлĕннăçăн пур отрăçлисенче те чакнă.

Ĕççĕрлĕх Англире промышлĕннăçăн пур отрăçлисенче те тăтăшах ӳсе пырат, официаллă пĕлтернисем тăрăх кăна ĕççĕррисен хисепĕ 2 мĕлйун çын шутланат.

Францире шултра буржуази рабочи класа хирĕç кĕрешсе тата саботаж туса пынă пирки, тăвата çул хушши ĕнтĕ промышлĕннăç начарланса пырат. 1938 çул пуçламĕшĕнче промышлĕннăç продукцийĕ 1929 çултинчен 30 проц. сахалтарах пулнă. Францири финанс олигархийĕ франк курсĕ çине пĕр чарăнусăр тапанса пынипе тавар хакĕсем йулашки çулта кăна 22 проц. ӳсрĕç, 1936 çулти май уйăхĕнчипе танлаштарсан 51 проц. ӳснĕ.

Францири рабочи клас капитал магначĕсен саботажне хирĕç вирлĕн кĕрешсе пырат; çав саботажа çĕнтерсен кăна Францин економикăлă лару-тăрувĕ лайăхланма пултарĕ. Урăхла пулсан вара, çĕршыв малтан пулнă кризисран тухиччен пурпĕрех çĕнĕ кризиса кĕрсе ӳкет.

Германире чĕртавар пачах та çителĕксĕрри тата строительствăна чакарни халех те ĕнтĕ ĕçлекен рабочисен хисепĕ пĕр мĕлйун ытла чакасси патне илсе пычĕ — 1937 çулти октябĕрте 19 мĕлйун та 130 пин çын пулнă, 1938 çулти йанварте 18 мĕлйун та 80 пин çын йулнă.

Хĕçпăшалсем тăвассипе касăхса кайсах ĕçлессĕ пулин те, кризис фашисла економикă çине ытларах та ытларах тапăнса пыма тытăнат. Фашисла правительсем Германине кризис йарса илессинчен картласа хăварма тĕмĕн пекех тăрăшаççĕ, анчах вĕсене капиталисăмла економикăн саккунĕсене чейен ултала май килмест. Йанварĕнче тата февральте суту-илӳ балансĕ пысăк пассив пачĕ. Çывăх вăхăтсенчех, апла пулсан, импăртăн та вăйлăн сахалланма кирлĕ пулат, вара чĕртавар йутçĕршывсенчен кӳрсе тăракан промышлĕннăçăн отрăçлисен кунçулĕ те вăйлăн начарланат.

Фашисла економикăн мĕн пур шалти хирĕçĕвĕсем вăйлăн çивĕчленсе пыни Германи фашисăмне тулти сыхăнусенчи авантюрăсемпе агреçси патне тата вăйлăраххăн тĕртсе пырат.

Йапонире кризис пырса тĕкĕнни хытăнах палăрат ĕнтĕ, ăна çак çĕршывăн чи кирлĕ вырăн йышăнса тăракан тулти суту-илӳвĕ чакни çинчен пĕлтерни те кăтартса парат.

Кăçалхи февральте, сăмахран, 1937 çулти февральпе танлаштарсан, експăрт 20 проц. чакнă. Çав вăхăт хушшинчех импăрт виçĕ пайран пĕр пайĕ чухлĕ сахалланнă.

Аграрлă тата колони пулса тăракан çĕршывсен таварсем илес пултарулăхĕ вăйлăн чакни, пĕтĕм тĕнчери рынăксенче конкуренци вăйланса пыни Йапонин тулти суту-илӳвĕ татах та ытларах чакасси патне илсе пырат.

Пуринчен малтан кризис пырса тивнипе Йапонин пиравăр промышлĕннăçĕсийĕн кӳрчĕ, халĕ ĕнтĕ унăн продукцийĕ сахаллансах пырат. Вăрçă тата касăхса кайсах хĕçпăшалсем туса кăларни çĕршывăн економикăлă ресурсĕсене ытларах та ытларах йухăнтарса пыраççĕ. Йапонири ĕççынни массисен пурнăçĕ питех те начарланса пырат. Таварсен хакĕсем уйăхран уйăхах хакланса пыраççĕ. Официаллă пĕлтернисем те ĕнтĕ рабочисен ĕçукçи вăйлăн чакнине пытарма пултараймаççĕ. 1931 çултанпа производствăри рабочисен хисепĕ 30 процент ӳснĕ, тӳленĕ ĕçукçи хисепĕ улшăнмасăрах йулнă.

Италире те ĕçсем çавăн пекех пулса пыраççĕ. Хĕçпăшалсем тăвас çĕре питĕ те нумай тăкак тунă пирки, çĕршыв йухăннă çемĕн йухăнса пырат. Италин тулти суту-илӳвĕ пысăк йăвăрлăхсем тӳссе иртерет, вăл фашисла економикăн кризисне татах та çивĕчлетсе пырат.

Италире фашисăм хăйĕн вăрçă расхучĕсене Италири рабочи класа тата ĕççыннисене çаратнипе витсе пырат. Продуктăсен хакĕсем ӳсеççĕ, ĕçукçи чакеат пырат. Ку ĕнтĕ çĕршывăн шалти политикăлă лару-тăруне начарлатмасăр иртме пултараймаст.

***

Капитал çĕршывĕсенчи економикăлă çĕнĕ йăвăрлăхсем капиталисăмла çистемăн кризисне ытларах та ытларах çивĕчлетсе пыраççĕ, капиталисăмла çистемăна ишĕлтерсе пыракан шалти хирĕçӳсене вăйлатаççĕ.

Икĕ çистемă — вилсе пыракан капиталисăм тата тĕреклĕнсе пыракан социалисăм çистемисем—хушшинчи уйрăмлăх вăйлăнрах та вăйлăнрах палăрса пырат. Капиталисăмла тĕнчен промышлĕннăç продукцийĕ 1937 çулта аран-аран 1929 çулти çӳллĕшне çитрĕ, халĕ тата çав çӳллĕшрен 15 процент йаханах чакрĕ пулсан, ССРС промышлĕннăç продукцийĕ 1929 çултанпа пилĕк хута йаханах ӳсрĕ, 1938 çулта та пысăк ӳсĕм парат. ССРС ĕççыннисен материаллă тата культурлă пурнăçĕ çулсеренех çирĕппĕн ӳсе пырат, çав вăхăтрах капиталисăмла çĕршывсенчи ĕççыннисене нумайрах та нумайрах хĕнхур тата асаплăх тӳсме лĕкет.

Маркс пĕрре кăна мар кашни кризис капиталисăма вилĕм патне çывхартса пырат, тесе кăтартса пăнă. Çак кăтартусене хальхи кризис татах та çирĕплетет, халĕ çĕрсе пыракан капиталисăм хăйĕн çистемин кризисĕ вăхăтĕнчи економикăлă виççĕмĕш чĕтренӳсен тапхăрĕнче пурăнат.

П. ПОЛЬАКОВ.

Францире укҫа йӳнелнине саккунпа ҫирӗплетессӗ

ПАРИЖ (ТАСС). Даладье радиопа ҫакӑн пек самах тухса каланӑ: правительства франк „девальваципе тума ирттерме (укҫа йӳнелнине саккунпа ҫирӗплетсе хума) йышӑннӑ, тенӗ.

Даладье хайӗн самахне ҫакӑн пуҫланӑ: Франци халӑхи правительства Франци тӳссе ирттерекен экономикӑлӑ пысӑк йывӑрлӑхсене сирсе парахма тытӑнчӗ, тенӗ.

„Правительства ҫӗршыв кунсулӗшӗн ответлӑ, вӑл халӑхи пек экономикӑлӑ лару-тӑрӑва малашне те пулма пама пултараймасть", тенӗ Даладье.

Экономикӑлӑ ҫирӗп политикӑна пурнӑҫа кӗртме, тенӗ малалла Даладье,— „пур йывӑрлӑхсене те тӳсме пултаракан ҫирӗп никӗс кирлӗ. Вальутӑна пирӗн халӑхи лару-тӑру па пӗр шай тӑракан тумалла. Вӑл пӗр шай тӑрасси пирки йаланах иккӗленмелле ан пултӑр, вӑл франка ҫине тапӑнакан атакӑна пусӗ лартӑр. Ака мӗнма, критика пуласран пӑшӑрханмасӑр, епӗ хамӑрӑн вальутӑна йӳнетме тата ана ҫав виҫере ҫирӗплетсе хума тӑрӑм.

Франци правительстви, Америка тата Англи правительствисемпе пӗтӗмӗшпех килӗшсе, франка ана ҫӗнтерӳлӗ хӳтлеме май паракан хакла курс тума йышӑннӑ. Ку решенине вальутӑна виҫе йенӗ килӗшнӗ тӑрӑх йышӑннӑ, ку килӗшӳ Франци правительстви пахӑнать".

Франци компарти Тӗпкомӗн политбюро ларӑвӗ

ПАРИЖ (ТАСС). Пайан Франци коммунисла партин политбюро ларӑвӗ пулса иртрӗ. Пичетлесе каларнӑ пӗлтерӳре: политбюро экономикӑлӑ лару-тӑру ҫинчен тата чи пуйан капиталиссем хистенипе ҫак йулашки вахатра правительства финанс тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫсем ҫинчен партин генеральнӑй секретарӗн Торезӑн докладне итленӗ, тесе каланӑ. Франци ӗҫҫыннисене йывӑр тивекен тӳрлерен налогсене 8 процент ӳстернипе политбюро хирӗҫлет. Тӳрлерен налогсем ӳссе пынипе пурнӑҫ хаклана пырать, тата йулашки икӗ ҫул хушшинче укҫа йӳнелнипе виҫҫӗмӗш хут ӗнтӗ саккунпа ҫирӗплетессӗ хураҫҫӗ. Ҫӗнӗ налогсемпе укҫа йӳнелнине саккунпа ҫирӗплетсе хурасси халӑх фрончӗн финанс программине, коммуниссен партийӗ ана пурнӑҫлама пӗрмай ӗҫнӗ пулни те пурнӑҫламан пирки пулать. Вӑл программӑна пурнӑҫламан ӗҫҫыннисен массин интересӗсене хирӗҫ умне каларса тӑратать. Франци ӗҫҫыннисен интересӗсене хӳтӗлесе политбюро ӗҫукҫине, ӗҫсӗррисене паракан пулӑшупа пенсисене танлаштарассипе пурнӑҫлама тавас тесе постановлени йышӑннӑ. Ҫакӑн пекех ваккӑн вкладсем хуракансен интересне сыхламала, вахатлӑ ӗҫҫыннисене пенсисене ӑсрассипе тата халӑх фрончӗн программине пурнӑҫламалла. Кунсӑр пуҫне политбюро коммуниссемпе социалиссем хушшинчи сыхӑнава ҫирӗплетес, реакцине хирӗҫ халӑх фрончӗн пӗрлӗхне ҫирӗплетес тӗлӗшпе пур ӗҫсе не те тума кирли ҫинчен постановлени йышӑннӑ.

Коммуниссен партин Тӗпкомӗн черетлӗ пленумӗ майӑн 27—29-мӗшӗсенче пулмалл. (ТАСС).

Йапонири хресчен массисен чухӑнлӑхӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Тайхо ку хулинчи рабочисен кварталӗ (Йапони). (Союзфото).

Тӗрӗслӳ испытанине хатӗрленесси — ответлӑ ӗҫ

Майӑн 20-мӗшӗнче Пӗтӗм Совет Сойузӗнчи шкулсенче ответлӑ тапхӑр—вӗренекенсен ҫулӳне тӗрӗслесси пуҫланать. Вӑл пӗр шкулсен ӗҫӗ анчах мар, пӗтӗм совет обществинӑсен ответлӑ ӗҫӗ пулса тӑрать. Тӗрӗслӳ испытанине ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илсе, лайӑх ирттересси кашни учителӗн мухтавлӑ ӗҫӗ. Вӗренӳ ҫулӗ пӗтнӗ ҫӗре кашни ачах лайӑх паллӑсемпе ҫиттӗр тесен, учителӗн ачасемпе пӗлес ӗҫлемелине асра тытмала. Пур ачапа та пӗр пек калаҫассинчен хӑтӑлса, кашни ачан психологилӗ уйрӑмлӑхӗсене вӗренсе ҫитмеле. Паллах, вӑл ик-виҫ кун хушшинче ӗҫлепипех пулакан йапала мар, ана ҫулталӑк хушшинче сӑнаса, вӗренсе пыни кирлӗ.

Ачасен кило пана урoксене тӗплӗн, аван вӗренсе пымала. Вӗреннӗ материалсене ачасем ан манчӑр тесен, учителсен ачасене куллен ӗҫлесе пыма вӗрентмеле. Ун пек ӗҫлесе пымасан, тӗрӗслӳ испытанинче нумай чӑрмав пулма пултарать. Испытани кунӗсем ҫывхарас умӗн ачасем ҫулталӑк хушшинче вӗреннӗ материалсене ҫӗрӗн-кунӗн тӗрӗслесе пӑхса тухма тытӑнаҫҫӗ. Паллах, апла туни сийенлӗ. Пӗр йенчен материалсене те лӑхса тухма ӗлкерейменҫҫӗ. Вара тепӗр кунне ывӑнна пуҫепе испытанине пыраҫҫӗ те, начар отметкӑ илеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та учителсен умӗнче тӗрӗслӳ испытани пуҫланиччен питех те ответлӑ задачӑ тӑрать. Пӗрремӗш программӑна тултарасси, ҫавӑнпа пӗрлех вӗренсе иртнӗ материалсене тӗрӗслесе тухасси. Испытании инструкцинче ҫырнӑ тӑрӑх испытани валҫи программӑсем туса ҫирӗплетнӗ. Ана кашни вӗренекен патне ҫитермелле. Унти кашни ыйтӑва тӗплӗн ӑнлантарса памала. Вӗренекенсемпе консультацисем туса иртерес пулать. Начартарах вӗренекенсемпе уйрӑм калаҫусем, вӗренӳ урокӗсем туса иртермеле. Вӗсене куллен пулӑшса пыни кирлӗ.

Вӗренекен ачасен ашшӗ-амӑшӗсен ачисене испытанине хатӗрленсе ҫитме ҫителӗклӗ условисем туса памала. Ана ытлашши ӗҫпе ывӑнтарса, испытанине хатӗрленес хастарлӑхне пӗтермеле мар. Испытании инструкцине вӗренекен ачасем тата вӗсен ашшӗ-амӑшӗсем хушшинче ӑнлантарас ӗҫе анлӑн сарса йамала. Вӗсемпе пухусем тата канашлусем туса иртермеле. Учителсен, клас руководителӗсен ачасене килӗсене сӳресе пуласшине те йӗркелемеле.

Хӑвӑспӳрт-Кипечри (Шӑхасан р.) вӑтам шкул ку тӗлӗшпе чылай кирлӗ ӗҫсене туса иртерчӗ. Тӗрӗслӳ испытании инструкцийӗпе вӗренекенсене анчах мар, вӗсен ашшӗ-амӑшӗсене те пухусенче тӗплӗн ӑнлантарса панӑ. Пухусенче хӑйсен ачисене испытание хатӗрленме условисем туса пама пулчӗҫ. Унтакла шкула ҫӳресси тата вӗренӳ пахалӑхӗ чылай хӑпарчӗ. Шкула ҫӳресси виҫҫӗмӗш чӗрӗкре 94,7 процент пулнӑ пулсан, йулашки чӗрӗке кашни кун 98 процентран кайа мар ҫӳреҫҫӗ. Уйрӑмӑнах VII „А", VII „Б" тата IX-мӗш классенче шкула ҫӳрессин процентӗ палӑрмалах ӳсрӗ. Испытанине хатӗрленнӗ май, социалисӑмлӑ ӑмӑртупа ударничӗства анлӑн сарӑлчӗ. Классем пӗр-пӗрин хушшинче испытанине хатӗрленсе ҫитес тӗлӗшпе ӑмӑрту договӑрӗсем туса ҫирӗплетрӗҫ, конкретлӑ обйазателствӑсем илчӗҫ.

Анчах районти организацисем (районти ӗҫ пайӗ, комсомол райкомӗ) учителсене хӗрӳлӗ вахӑтра унта-кунта турткалаҫҫӗ. Акӑ, виҫҫӗмӗш чӗрӗкре Ф. Андрейӗв 4 кунта 5 сехет, В. Петров—8 кун, М. Вуколӑв—2, С. Иевламнейӗв—3, Никитин—8, Д. Федӑрӑв 1 кун вӗрентмен.

Партипе правительства учителсен умне лартнӑ чыслӑ задачӑсене большевикла пурнӑҫа кӗртмеле. Тӗрӗслӳ испытанине ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илсе, вӗренӳ ҫулне лайӑх вӗҫлер.

Учител К. Лазарӗв.

Ҫичӗ республик спартакиачӗ

Физкультурӑпа спорт ӗҫӗсен Пӗтӗм Сойузри Комитечӗ августӑн 6—7—8-мӗшсенче Шупашкарта нацилӗ автономлӑ республикӑсен спартакиадине туса иртерме йышӑннӑ. Спартакиадӑна Башкир, Чӑваш, Мордва, Удмурт, Тутар, Мари тата Коми республикӗсен хулисемпе колхозӗсенчен 300 спортсмен килеҫҫӗ.

Спартакиадӑ программи тӑрӑх арҫынсемпе хӗрарӑмсем валҫи кроссем, шоссе тӑрӑх велосипедпа чупассине шывра ишекенсем байдаркӑпа тата шлюпкӑпа ишессине организацилеҫҫӗ.

Джамбул
Казах халӑхӗн йурӑҫи-импровизатӑр, орденоносӗц.

Сулейман Стальскине

Дагестанӑн шӑпчӑкӗ,
Ашуг Сулейман,
Йалан ереветлӗн йухтар йурруна!
Курман епӗр ӗлӗк хӗвеллӗ куна,
Тӗтре айӗнчен ҫутта тухайман.

Пӑхҫам, халь!—
Хирте йешӗрес тульпансем.
Кӗмӗл пек йанрачҫӗр алри тӑмрасем,—
Мухтар сарлака Советстан ҫӗршывне,
Аста шӑпчӑксен чи паха ҫӗршывне.

Шӑпчӑк йуррине халь тарават халӑхсем,
Клеткӑсенче марҫкӗ—
Топӑльсем ҫинче
Куллен савӑкраххӑн йурлаҫ шӑпчӑксем
Ҫеҫенхирсенчи, сӑртсенчи сатсенче.

Хӗвел сирсе йачӗ тӗтре чаршавнӗ,
Тӳпе хаклӑ чул пек ҫиҫет йалкӑшса...—
Ленинпала Сталин пур халӑхсенех
Пачӗҫ чи телейлӗ пурнӑҫ саккунне,
Шӑпчӑксене пачӗҫ таса уҫӑ сас.

Мухтанать халь халӑх санпа, Сулейман,
Ахах пек, мерчен пек йурру сан таса.
Джамбул та йурлать халь сана мухтаса,
Салам сана, шӑпчӑк, тӑван халӑхран.

Кӗрнеклӗ, йем-йешӗл ҫӗршыв умӗнче
Илемлӗ сӳнет Гӳлистан сачӗсен,
Ватлӑх та хевтесӗр халь ун умӗнче.
Ҫапах та йан-уҫҫӑн йурлаҫ ҫулран-ҫул
Ватӑ Сулейман, кӑвакӑрнӑ Джамбул.

Кайкӑрч пек вӗҫеҫҫӗ пирӗн йурӑсем
Аслӑ ҫӗршыв тӑрӑх ҫулпуҫӗ патне,—
Ун шухӑшӗ тарӑн кӑвак тинӗсрен,
Вӑл вайлӑ, хӑватлӑ ҫил-тӑвӑлсенчен,
Ирӗкепе чаплӑ вӑл ҫӳлӗ тусенчен
Асанӗ пур ӗмӗр те ун ҫутӑ йатне...

Ирӗккӗн йурлатпӑр Стальскипе епир,
Йурӑсенче пирӗн—ӑс, чӗре таппи.
„Пирӗн Сталин!" тетпӗр те епӗр йурӑра,
Йешӗрет тульпан пек ҫӗршывӑм вара,
Йура та хӑйехҫке шӑранса йанрать
Уҫҫӑн та хӑватлӑн—мӗнпур ҫӗршывра!

1937.

Н. ЙАНКАС. куҫарнӑ.

Дружинӑ ӗҫӗ йанах

Тукачра (Елӗк р.) пушарпа кӗрешекен ирӗклӗ дружинӑ членӗсем хӑш-пӗр чухне хурал та тӑмаҫҫӗ. Лашасемпе хурал тӑрас ӗҫе йӗркелемен. Пушар хатӗрӗсене пӗр ҫӗрте усрамаҫҫӗ, вӗсене сапаласа пӗтернӗ. Килсем умне шыв лартман. Дружинӑн пӗр насус пур, унӑн та пулсан пыршисем шӑтса пӗтнӗ. Дружинӑ начальникӗ П. Йанович пушартан сыхӑ тӑрас ӗҫе йӗркелеме шутламасть.

Д. Матвейӗв.

Китай ҫинчен лекци

ПСК(б)П Обком парти вӗрентӗвӗн ҫурчӗ ҫумӗнче май уйӑхӗнче Шупашкар хулинчи ӗҫҫыннисем валли пилӗк лекци туса иртерет. Лекцисем кашни канмали кун, Строителсен клубӗнче пулаҫҫӗ. Лекцисене пысӑк квалификацилӗ лектӑрсем вулаҫҫӗ.

Иртнӗ канмали кун, майӑн 6-мӗшӗнче, Строителсен клубӗнче Китай ҫинчен лекци пулчӗ. Итлеме халӑх нумай пухӑннӑ: 300 билета йалтах илсе пӗтернӗ.

Лектӑр А. Разбитнӑв йулташ хӑйӗн икӗ сехет хушши ытла тӑсӑлнӑ лекцийӗнче Йапони импералисӑмне хирӗҫ паттӑрӑн ҫапӑҫакан аслӑ Китай ҫинчен тӗплӗн ҫутатса пачӗ. Вӑл, нацилӗ ирӗклӗхшӗн тата никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассишӗн кӗрешес ӗмӗтпе пӗрлӗхлӗ фронта пӗтӗҫнӗ 450 мӗлйунлӑ Китай халӑхӗ, оборонӑран йулашки вӑхӑтра активлӑ наступленине куҫса, Йапони ҫарӗсене чылай йывӑр ҫухатусем тутарни ҫинчен каларӗ. Йулашкинчен Китай халӑхӗ Йапони захватчикӗсене пурпӗрех Китай территори ҫинчен намӑслӑн хӑваласа кӑларса йарассине палӑртрӗ.

Лекци интереслӗн иртрӗ. Итлесе ларакансем пит нумай ыйтусем пачӗҫ.

Майӑн 12-мӗшӗнче Д. Данилӑв лектӑр „Слово о полку Игореве" йатлӑ историлӗ чаплӑ произведени ҫинчен лекци вуласа парать.

Майӑн 18-мӗшӗнче „Пӗрганнисем хушшинчи пӗрремӗшӗ-РСФСР ҫинчен лекци пулать. Лектӑр А. Разбитнӑв йулташ.

Майӑн 24-мӗшӗнче „Граждӑн вӑрҫин геройӗсем В. И. Чапайӗв тата Н. А. Щорс" (лектӑр Д. Андрейӗв), майӑн 30-мӗшӗнче „Социалисӑм тата коммунисӑм" темӑсемпе (лектӑр Д. Ийевлӗв) лекцисем пулаҫҫӗ.

С. Конст.

Футбол

„Темп"—„Спартак" 3:1

„Темп" спорт обшчествин 1-мӗш футбол команди кӑҫалхи футбол ҫезонне вӑхӑтра кӗтсе илчӗ. Ҫуркуннерепе вӑл чылай вӑйӑсем ирттерчӗ, уйрӑмах йулашки кунсенче Горькирен килнӗ „Строител" командипе тата майӑн 6-мӗшӗнче Хусанти „Спартак" командипе выльани „Темп" футболисӗсемшӗн ответлӑ вӑйӑсем пулчӗҫ.

Шупашкар халӑхӗ футбол вӑййине йуратать. Ҫавӑнпа ӗнтӗ майӑн 6-мӗшӗнче Хусанти „Спартак" командипе Шупашкарти „Темп" командин футбол вӑййине курма хула ҫыннисем пите йышлӑ пухӑнчӗҫ.

Вӑйа 3:1 шутпа „Темп" командин ҫӗнтерӳпе пӗтрӗ. „Темп" командинче Михайлӑв, Платунов тата Ҫивовпа Зайцӗв йулташсем аван выльарӗҫ. Хӑнасен командин капитанӗпе вратарӗ те хӑйсен вӑйӑ маҫтӑрлӑхӗпе курма пыракансене савӑнтарчӗҫ.

М. Ижейӗв

Тӗрӗсленсе килнӗ заметка

Шӑхасан районӗнчи Доронин йачӗпе тӑракан колхоз ку тарана ҫитсе те государствӑна, йасмӑк 12 центнӗр, аш-какай 4 центнӗр (иртнӗ ҫулхишӗн) парса татман. Александр Игнатйӗв кладовшчик айӑпӗпе сысна ферми валли уйӑрса хунӑ 600 пӑт ҫӗрулми ҫӗрсе кайнӑ, шыва хутнӑ кантӑра 300 ҫурӑм ытла вӑрласа кайнӑ. Колхоз счетовочӗ пулса ӗҫленӗ Максим Куҫмич колхоз кассинчен 600 тенкӗ укҫа вӑрланӑ,—тесе ҫырса пӗлтернӗччӗ Иванов йалкор.

Заметкӑна ПСК(б)П Шӑхасан райкомӗ тӗрӗсленӗ. Йалкор ҫырса пӗлтернӗ фактсем ҫинчен колхозниксен пухӑвӗнче сӳтсе йавнӑ. Пухура ытти ҫитменлӗхсене те нумай палӑртнӑ. Колхозниксен пухӑвӗ Александр Игнатйӗвпа Максим Куҫмич ӗҫӗсене суда пама йышӑннӑ.

Ҫитӗннисене вӗрентесси

Йаровойкассинчи (Йетӗрне р.) хут пӗлменнисемпе сахал пӗлекенсем 22 ҫын пур. Анчах вӗсене вӗрентме ку таринччен те тытӑнман-ха. Ҫитӗннисене вӗрентесси ҫинчен йалсоветӗнче ӗҫлекенсем шутламаҫҫӗ те.

И. Фомин.

Тинкеш (Йетӗрне р.) Йалсоветӗнчи ҫитӗннисен шкулӗ йанвар уйӑхӗнче ӗҫleme тытӑнчӗ. Халӗ вӑл шкултан хут пӗлменнисемпе сахал пӗлекенсене 39 ҫынна вӗрентсе кӑларчӗҫ.

Р.

Извещение

На заседание выездной центральной парттройки Комиссии Партийного Контроля при ЦК ВКП(б), имеющее быть 11 мая 1938 г. в гор. Чебоксарах в здании партколлегии, для разбора апелляций вызываются следующие лица:

1. Николаев Андрей Николаевич.
2. Русанов Давид Макарович.
3. Красильников Мефодий Степанович.
4. Матвеев Федор Матвеевич.
5. Медведев Семен Ефремович.
6. Печников Алексей Константинович.
7. Петров Николай Яковлевич.
8. Марков Георгий Маркович.
9. Пигусов Николай Алексеевич.
10. Яковлев Порфирий Яковлевич.
11. Игнатьев Николай Алексеевич.

Секретарь партколлегии по ЧАССР ШИШКИН.

Ответлӑ редактӑр Н. М. СЕМЕНАВ.

Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссариачӗ

Пур предприйатисене, учреждӗнисене тата организацисене ҫакӑн ҫинчен асӑрхаттарать: рабочисенчен, служӑшчисенчен тата вӗсемпе пӗрле шутланакансенчен 1938 ҫулхи март уйӑхӗнче ӗҫукҫинчен мӗн чухлӗ культсбор тытса йулни ҫинчен кӑҫалхи майӑн 12-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр отчотсем (47-мӗш № формӑ) ҫырса районсенчи йе хуласенчи финанс пайӗсене тӑратмала.

Отчот формисене районсенчи йе хуласенчи финанс пайӗсенче илмеле.

Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссариачӗ.

Совет писателӗсем мӗн ӗҫлеҫҫӗ

ВСЕВОЛОД ИВАНОВ.—Граждӑн вӑрҫин чаплӑ геройӗ А. Пархоменко ҫинчен повӗҫ. А. МАКАРЕНКО.—Совет ҫамрӑкӗсем ҫинчен виҫӗ кӗнеке. КОНСТ. ФЕДИН.—Кӑмӑлсен романӗ.

Граждӑн вӑрҫин чаплӑ геройӗ Александр Пархоменко ҫинчен ҫырнӑ повӗҫ

Епӗ граждӑн вӑрҫин чаплӑ геройӗ Александр Пархоменко ҫинчен пысӑк историлӗ повӗҫ ҫырса пӗтертӗм. Рабочи большевик К. Е. Ворошилӑв тӳррӗн йертсе пынипе воспитани илнӗ тата Ворошилӑвӑн сывӑх тусӗ Александр Пархоменко питех паха тата интереслӗ ҫын. Епӗ вӑл кӗнекене йуратса ҫыртӑм. Пархоменкӑн чаплӑ пурнӑҫӗ нумай картинӑсем урлӑ курӑнать. Кунта Пархоменко вунпилӗк ҫула ҫитсен ӗҫлеме пуҫланӑ Луганскӑри савӑтсем. Кунта Пархоменко 18 ҫулта чухне кӗнӗ большевиксен революцичченхи организаци те. Кунта Донбасра Октабӗршӗн кӗрешни; Украинӑна пырса кӗнӗ нимӗҫсемпе вӑрҫни; шур-казаксем йышӑннӑ Дон урлӑ чаплӑ та паллӑ „Ворошилӑв колоннине" тавӑрӑнни; Царициншӑн кӗрешни; Сталин йулташ хушса йанипе Мускава Ленин патне кайни те пур. Малала 14-мӗш дивизийе йертсе пыни польаксемпе, Врангельпе, Махно бандисемпе вӑрҫни. Пархоменко Махно бандине ҫӗмӗрсе тӑкса кӗрешӳ постинче вилет. Епӗ ҫак кӗнекере воспитани илнӗ тата ыттисене те пӗрмайах воспитани парса пынӑ, пурнӑҫа савӑнаҫлӑн тата ҫирӗппӗн йуратнӑ, большевик-рабочи сӑнарне кӑтартатӑп.

Халӗ епӗ тата ҫӗнӗ пйесӑ ҫыратӑп. Вӑл вырӑс историнче пит палӑртман событипе кӑтартса парать. Вӑл „Семилетняя война" тени, тӳррӗмӗн каласан, Кунерсдорф патӗнчи ҫапӑҫура вырӑс ҫарӗсем 2-мӗш Фридрихӑн ҫарӗсене ҫӗмӗрсе тӑкса Померине тата Хӗвелтухӑҫ Пруҫине кӗнине, йулашкинчен Берлина илнине кӑтартакан сыпӑк пулать. Пйесӑра Берлина туртса илнине кӑтартнӑ. Ку 1760 ҫулта пулнӑ. Ҫак пйесӑна епӗ 1938 ҫулхи ийуль уйӑхӗ тӗлне ҫырса пӗтерме шутлатӑп, ҫавӑн хыҫҫӑнах вара хальхи вӑхӑтри ҫинчен, пайанхи кунӑн ҫыннисем ҫинчен, социалисӑм ҫыннисем ҫинчен пйесӑ ҫырма тытӑнатӑп.

Всеволод Иванов.

Совет ҫамрӑкӗсем ҫинчен ҫырнӑ виҫӗ кӗнеке

Хальхи вӑхӑтра епӗ „Флаги на башнях" йатлӑ романа ҫырса пӗтеретӗп, ана кӑҫал „Красная новь" журналта пичетлесе кӑлараҫҫӗ. Ҫав романра епӗ ҫамрӑксен коллективне унӑн организацийе тата аталаннӑ процес урлӑ мар, анлӑ пурнӑҫра, совет обшчествин пӗтӗм ҫӗнтерӗвӗсене, савнашкалах вӑл воспитани коммунисла мораль парас йенӗпе тунӑ ҫӗнтерӳсене тӗплӗрехӗн кӑтартни тӑрӑх ҫутатса пама тӑрӑшатӑп.

Кӗркунне тӗлне епӗ „Молодая Гвардия" журнал валли „Пути поколения" йатлӑ роман ҫырса хатӗрлетӗп, унта епӗ совет ҫӗршывӗнчи кашни ҫамрӑк граждӑн умӗнче тӑракан аслӑ ирӗклӗхе кӑтартса парасшӑн. Ҫав аслӑ ирӗклӗхре тума пултарассин пуйанлӑхӗсем ҫеҫ мар, ответлӑх пуйанлӑхӗсем те пур. Пирӗн ҫамрӑксем умӗнче ҫавӑн пек аслӑ ҫулсем уҫӑ пулнипе те ӗнтӗ хӑйне валли тӗрӗс ҫул тупма тӑван ҫӗршывшӑн тӑрӑшни тата коммунисла принципсене ҫирӗппӗн тытса пыни кирлӗ.

Ҫулталӑк вӗҫӗнче манӑн „Книга для родителей" йатлӑ кӗнекен иккӗмӗш пайне памала. Халӗ епӗ ҫав кӗнекен пӗрремӗш пайӗ пирки ачасен ашшӗ-амӗшӗсенчен илекен нумай ҫырусем мана епӗ ҫемйене воспитани паракан коллектив вырӑнне хуфса ҫырма тытӑннӑ пысӑк тӑватӑ томлӑ кӗнеке совет ашшӗ-амӑшӗсене чылай усӑ кӳрет тесе ӗнентереҫҫӗ. Иккӗмӗш томра совет обшчествинчи ҫынсен культурӑ ыйтӑвӗсене ҫутатса панӑ.

Ҫакнашкал ӗҫсем тӑватӑп епӗ кӑҫалхи ҫул. Унсӑр пуҫне епӗ ҫынсем ҫине пӑхассине кӑтартакан темӑпа комеди ҫыратӑп.

А. Макаренко.

Кӑмӑлсен романӗ

Манӑн кӑҫалхи тӗп ӗҫ вӑл—ҫӗнӗ роман, ана ҫырасси ҫинчен епӗ чылай малтан шухӑшласа хунӑ.

Кӗнеке виҫӗ пайлӑ пулать. Пӗрремӗш пайӗ 1910 ҫула кӑтартать, иккӗмӗш пайӗ 1919 ҫула кӑтартать. Ҫак икӗ пайра кӑтартнӑ событисем провинцири пуйан хулара пулса иртеҫҫӗ. Епӗ нумай ҫынсене, обшчествӑн тӗрлӗ йенӗсене—ҫамрӑк-революционерӑн вӑрттӑн пурнӑҫӗ пуҫланнине, депо рабочине, грузчиксене, суту-илӳ тӑвакана „Губернири" театӑрӑн акторӗсене кӑтартатӑп. Романра театӑрӑн чӑн та пысӑк кирлӗ вырӑн йышӑнмала, мӗншӗн тесен „Искусствӑпа пурнӑҫӑн сыхӑнӑвӗ" романа ҫырассин тӗп шухӑшӗ пулса тӑрать.

1910 ҫулта романри геройӑн революционерӑн тата героинӗн—пулас актрисӑн малтанхи ҫамрӑклӑхӗ иртет. Романра тӗп вырӑнта тӑракан ҫынсен сыхӑнӑвӗ суту илӳ вайлӑ пыракан вырӑс хулинче унӑн киревсӗр пуйанлӑхӗн хирӗҫӗвӗсем тата чухӑнлӑх ҫинче пуҫланса каять. Йаланах чӑнлӑха „кӑтартас" тӗллев лартнӑ театра кунта Росҫийӑ провинцин сценин тата унӑн акторӗсен сӑнарепе кӑтартмала пулнӑ.

Паттӑрла 1919 ҫула романра граждӑн вӑрҫи картинӗсем пек кӑтартнӑ. Хула шургвардейцӑсенчен сыхланать, революцине фронта кайса сыхласа тӑраҫҫӗ. Пурне те, ҫав шутрах искусствӑна та хӗрлӗ йалава сыхланӑ ҫӗре мобилизациленӗ. Фронтрах ҫапӑҫусем пулман хушӑра театӑрсем ӗҫлеҫҫӗ. Чӗрече хӗрӳлӗн тапни пурнӑҫ ҫӗнтерӗвӗшӗн паттӑрӑн вилнине улшӑнать. Романри героинӑ хӑйӗн пурнӑҫне контрреволюципе кӗрешнинче, Хӗрлӗ Ҫара чӗререн парӑнса ӗҫленинче тата фронтри театрӑн сцени ҫинче чӗре пирвайхи хут чӗтренсе хумханнӑ чухне пуҫлать. Фронт хыҫӗнче сыхласа тӑракан хула хӑйӗн ырлӑхне кӗтет, унта иртнисен шанчӑксӑрлӑхӗ малашнехине иккӗленмесӗр ӗненни тӑрать. Йулашкинчен романӑн виҫҫӗмӗш пайӗ. Унта пулакан ӗҫсем 1934 ҫулта пулса иртеҫҫӗ. Епӗ унта хамӑр вӑхӑтри ҫынсен пултарулӑхне кӑтартасшӑн.

Граждӑн вӑрҫи кайа инҫете тӑрса йулчӗ, социалисӑм ҫӗнтерӗвӗсен иккӗмӗш пилӗкҫулӑхӗ йешӗрет. Ана парӑнна ҫынсем халиччен пулман тухӑҫла, ирӗклӗ ӗҫлев условисенче пурӑнаҫҫӗ. Анчах йулашки ҫапӑҫу пулман-ха, тӑшман ҫуракӑсенче тата шӑтӑксенче пытанса пурӑнать, вӑл ҫыртни вилӗм кӳрет. Такҫан провинцинче йавӑнна ҫипсем Ленинградра ҫыхӑнна.

Чаплӑ актрисӑн ҫулӗ паллӑ большевик пурнӑҫӗпе, ватӑ актор тата провинцинче пулнӑ драматург пурнӑҫӗпе улшӑнать. Пысӑк сценӑ чӑнлӑха художӗствӑлӑн кӑтартнине шырать. Искусствӑ, вӗренекен пекех, пурнӑҫа вӗренет, ҫав вӑхӑтрах пурнӑҫа учител пекех, вӗрентет. Романри геройсем кунран кунах ҫавнашкал пурнӑҫра пурӑнаҫҫӗ. Искусствӑ вӗсене сценӑ геройӗсем тӑвать, анчах вӗсем чи пирвайах пурнӑҫ геройӗсем,—ҫакнашкал пулма пулӑшасси искусствӑн задачи пулать.

Манӑн ҫак романа пысӑк йухӑмпа тултарас килет, лайӑх сӳжетпа ҫыхӑнтарас килет, нумай характӗрсем парас килет. Ку вӑл кӑмӑлсен романӗ пулмала, унта пурнӑҫӑн реалисӑмлӑ картинӗсем геройлӑхӑн романтикипе ҫыхӑнакан пулмала.

Конст. Федин.

Сывлӑха Сыхлав Халӑх Комиссариачӗ

Улатӑр хулинче госсанинспектӑрсен

4 уйӑхлӑх курсне

ОРГАНИЗАЦИЛЕНӖ

Курса сывлӑха сыхлав системинче ӗҫлекенсене, пуҫламӗш шкулта 7 ҫултан кайа мар чухлӗ вӗреннисене илеҫҫӗ.

Заньатисем **майӑн 20-мӗшӗнче** пуҫланаҫҫӗ.

Курса районсенчи сывлӑха сыхлав пайӗсем панӑ командировкӑсем тӑрӑх ҫеҫ йышӑнаҫҫӗ.

Вӗренме кайнисем ҫумӗнче ӗҫукҫи йулать.

Курсантсене уйӑха 65-шер тенкӗ стипенди параҫҫӗ, обшчежити ҫук. Ҫул укҫине районсенчи сывлӑха сыхлав пайӗсем тӳлеҫҫӗ.

Чӑваш АССР Сывлӑха Сыхлав Халӑх Комиссариачӗ.

АСТУТАРНИ

Шупашкар хулинчи чылай коллективсем ССР Сойузӗн оборонӑ тӗрекне вӑйлатмали займне ҫырӑнса илекенсене облигацисене алла парассине тӑсаҫҫӗ. Ҫак ҫитес ҫывӑх кунсенчех займ ҫырӑнса илнисемпе расчот туса пӗтерсе, облигацисене алла памала. Облигацисене ҫырӑнса илекенсене пӗтӗмпе миҫе тенкӗлӗх алла пани ҫинчен сведенисем майӑн 10-мӗшне перекет кассине тӑратмала. Ҫакӑн пирки хулари пур коллективсене те астутаратпӑр.

ТӖП ПЕРЕКЕТ КАССИ.

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита 231

Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ д 408.